С(Чув)
А94
233З4-чув

Порфирий
ФАНАСЬЕВ

# ЧУН ÇУТИ



Национальная библиотека ЧР
4-023334

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

(Чув)
А 94

Порфирий
АФАНАСЬЕВ

# ЧУН ÇУТИ

*Сăвăсемпе*
*поэма*

12-96

Чăваш кĕнеке
издательстви
Шупашкар — 1980

84.3 Чув
А 94

ПГ
23 ю 11 ОКТ 2017

М 23334 - чув.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ
РЕСПУБЛИКИ

Афанасьев П. В.
А 94 Чун çути: Сăвăсем.— Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 1980. 128 с.
15 п.

Хăйĕн сăвви-юрринче П. Афанасьев Тăван çĕршыва, партие, халăха мухтать. Çутă пуласлăхшăн çине тăрса кĕрешме чĕнет. Кĕнекене кĕртнĕ «Çăкăр» поэма публицистла витĕмлĕхпе, патриотла хĕрӳлĕхпе палăрса тăрать.

84.3Чув

А $\frac{0763-076}{М\ 136(03)-80}$ 85—80

© Чăваш кĕнеке издательстви, 1980 ç.

## ÇУРАЛНĂ ÇĔР — ХИТРЕ ТЕ АСЛĂ

* * *

Туссем, ан вăрçăр, çĕр хитре те аслă,
Пĕрре кăна пурнатпăр тĕнчере.
Пыл хурчĕсем пек, пулăр пин-пин саслă,
Çапах та килĕштерĕр çемьере.

Туссемĕр, ан вĕтелĕр, ан вакланăр,
Пĕр-пĕринчен ыйтсамăр çирĕпрех.
Хавхалану килет пулсассăн тарлăр,
Вут-çулăмра çунтарăр чĕрĕре.

Амаланать пулсан хĕлхем-и, вут-и? —
Çунма ан хăрăр, итлĕр кăмăла.
Ан тив, чунра йăл! хыпнă шалти çутă,
Çул кăтартса, шав чĕнтĕр малалла.

Туссем, ан вăрçăр, çĕр хитре те аслă,
Илем харкашупа килĕшес çук.
Хавас çук чух пулма пĕлер хаваслă,
Кулма вăй çитерер хурланнă чух.

## КАÇАЛĂК ВĔÇЛЕРĔ СУХАÇĂ

Çакна ют çынна кăтартмаççĕ.
Анчах эпĕ куртăм пĕрре:
Каçалăк вĕçлерĕ сухаçă,
Выртса ыталарĕ çĕре.
Тарне шăлса илчĕ.
                Чуптурĕ,
Чуптурĕ хура тăпрана...
Сасартăк, чан çапнă пек, юрă
Хупларĕ мĕнпур таврана.
Сасартăк çĕкленчĕ мăнаçлă
Тахçан анса ларнă хĕвел.
Ăçтан çавăн чухлĕ асамлăх,
Ăçтан çавăн чухлĕ мехел
Çак ырă сухаçăн?!
                Тăванăн,
Ман тантăшăн, тимĕрç ачин?
«Тархасшăн,— чĕнет вăл,— халь манăн
Патшалăха кĕрĕр, эппин».
Эп кĕтĕм.
Фонтан тапнă евĕр
Çӳле вăркăшан тырăра
Çут ĕмĕтĕн сăрчĕ, атьсемĕр,
Çывхарчĕ, вылярĕ умра.
Эх! Чаплă-мĕн тырă тивлечĕ —
Таса, пархатарлă тивлет:
Таçта паçăр вăрçă кĕрлетчĕ,
Халь, итлĕр, ав, юрă кĕрлет!
Çиçет тырă çумăрĕ витĕр

Садсем айне пулнă хула,
Завод хапхинчен пĕр таттисĕр
Машинăсем тухрĕç çула.
Тем пысăкăш кантăклă çуртăн
Çынна тарават алăкне
Хăюллăн пырса уçса кур та,—
Эс лекĕн сухаçă килне.
Эс курăн унта балерина,
Поэт эсĕ курăн унта.
Пĕр хĕрĕ калать пианино,—
Шопен тунсăхлать çĕр хута.
Курсамăр: епле илĕртӳллĕ,
Епле килĕшӳллĕ тĕнче!
Ăс-хакăллă пурăнăр, çӳллĕ
Хĕрӳллĕ хĕвел айĕнче.
...Юмах тĕнчи пек кĕрхи каçăн
Асамлăхне туйрăм тӳрех,—
Каçалăк вĕçлерĕ сухаçă.
Выртса ыталарĕ çĕре.

## РОССИЙПА ЛЕНИН

Чăвашăн телейĕ —
Россия та Ленин!
Пин çул хыçа юлĕ:
Çак икĕ сăмах
Нихçан шупкалмасăр,
Ахахăн-мерченĕн
Чĕр пурнăç пек çунĕ
Пирте яланах.

Аннемĕр пек пулчĕ
Хăватлă Россия,
Вăл хăй ытамне
Пире илчĕ йăтса,
Аттемĕр пек — Ленин —
Асаплă çĕр çийĕн
Телей хĕвелне
Ялтăр ячĕ çутса.

Чăвашăн раскалĕ —
Россия та Ленин!
Вăл çав раскалпа
Алтăр çăлтăр таран
Тĕпче савăнмалăх
Мăнаçлăн çĕкленнĕ,
Вăл ват Атăла
Пÿлсе хурĕ ыран.

Сăпайлă, ятуллă,
Ĕçчен, пултаруллă,

Çӗр пин кӗвӗ юраллă
Халăх паян —
Машинăллă, тракторлă,
Тулăх тырпуллă,
Кӳрши-аршипе
Тăванран та тăван.

Пуласлăх тӗрекӗ —
Россия та Ленин!
Чăваш совет халăхӗн
Çулӗ — пӗрре —
Утать вăл хăюллăн
Ильич пехилленӗ
Чи чаплă, чи ирӗклӗ
Çут ӗмӗре.

Ялав вăркăшать-и
Сулмаклăн, кӗреннӗн
Çиçет-и çӳл ӗмӗт,
Пирге яланах,—
Ахахăн-мерченӗн:
«Россия та Ленин!»
Кăвак хуппи евӗр
Çак икӗ сăмах!

## КУ ЭСĔ, МАН ТĂВАН ÇĔРШЫВĂМ

Ку пĕтĕмпех — Чăваш çĕршывĕ:
Тăрнакуç пек таса çăл шывĕ,
Кĕтни, Çавалĕ, Сăрĕ, Вылĕ,
Сĕткенĕ, сывлăшĕ, симпылĕ,
Ем-ешĕл курăклă çаранĕ,
Çурта пек тӳрĕ хыр вăрманĕ,
Шыв хĕрринчи йăмраллă ялĕ,
Кикак-кикак хур-кăвакалĕ,
Упи, пакши, тилли, мулкачĕ,
Чĕкеçĕ, пăчăрĕ, хăлачĕ —
Ытла тăван, ытла та çывăх.
Ку пĕтĕмпех — Чăваш çĕршывĕ.

Ку пĕтĕмпех — Чăваш çĕршывĕ.
Эс çĕнĕ те, эс питĕ кивĕ.
Сăваплă Улăп тăприсемлĕ,
Кăлканлă, хытхура çеремлĕ
Çĕрпе кунçул йăранĕ урлă
Курнать ман несĕл — хĕнлĕ-хурлă,
Сăхманлă, çĕтĕк çăпаталлă,
Çапах мал ĕмĕтлĕ, хаваллă,
Çапах тӳрккес, çапах пăлхавлă,
Пин юрăллă, пин-пин сăмахлă...
Пуçа усса ларман хĕр-ывăл
Ӳстернĕ эс, Тăван çĕршывăм.

Ку эсĕ, ман Тăван çĕршывăм —
Хăватлă, çирĕп, чĕрĕ-сывă,

Октябрьте хӗвел ҫунатлӑ
Эс ҫӗнӗрен тепре ҫуралнӑ.
Сана сӳнми телей пилленӗ
Тӑван аттемӗр — Аслӑ Ленин.
Ҫав тивлетпе — сулмаклӑ, ирӗк —
Эс ҫӗрӗн-кунӗн, каҫӑн-ирӗн
Шав ҫӳлелле ӳсме пуҫланӑ,
Ӗҫпе кӗрешӳре туптаннӑ,
Эс хывнӑ хӳхӗм юрӑ-сӑвӑ.
Ку эсӗ — ман Тӑван ҫӗршывӑм.

Ку пӗтӗмпех — Чӑваш ҫӗршывӗ.
Хӑюллӑ та ӑста хӗр-ывӑл:
Мала ыткӑнакан Чапаев,
Мухтавлӑ кӑйкӑр Николаев,
Трибун — кӑвар чӗреллӗ Ҫеҫпӗл,
Искусствӑра ҫӗкленнӗ шеппӗн
Надежда Павлова...
Сахал-и
Чӑвашӑн чапӗ, чун хавалӗ?!
Тӗнче курмалӑх, ӑмсанмалӑх
Ҫитӗнӳсем тӑвать те халӑх,—
Калатӑп эп: Вӑйлан, ан ывӑн,
Тӑван сӑпкам, Тӑван ҫӗршывӑм!

Ку пӗтӗмпех — Чӑваш ҫӗршывӗ.
Кӗҫех эс ҫӗнӗ тинӗс хывӑн.
ГЭС ҫутисем пин-пин хӗвелӗн
Ҫуталӗҫ Атӑлта илемлӗн.
Ҫӗр кисретсе ӑсанӗҫ шавлӑн

Вĕр-çĕнĕ тракторсем хăватлăн.
Ку — ман çĕршыв. Таса гӳпеллĕ,
Пуян та тулăх уй-хирсемлĕ,
Хăмлаллă, çăкăрлă, садсемлĕ,
Ĕçчен, ăста, маттур çынсемлĕ...
Эс ĕмĕр-ĕмĕр пурăн сывă,
Тăван çĕршыв — Чăваш çĕршывĕ.

## ЧĂВАШ ÇĔРШЫВĔ

Çĕршывăмçăм! Ак эсĕ ман умра!
Çулталăк мар, пĕр уйăх та иртмерĕ,—
Ярăнтарать каллех Çавал кĕперĕ,
Картин-картин чупса тухать йăмра.

Хушпу тенки пек йывăр хăмлупа,
Мана курса, хавалсăн ал çупатăн,
Пит-куçăма çăл шывĕпе çăватăн
Аваллăхран пыран ыр йăлупа.

Çуртсен çамки — çут ĕнчĕ те ахах.
Вилмест юмах! Пурнать юмах паян та,
Çынсем çине шăтарарах пăхан та —
Кашнийĕнче Кĕлпук мучи пурах.

Çĕршывăмçăм! Çатма пек гакăр çул
Чупать — ку тейĕн аслă юн тымарĕ,
Ума тухать Тăвайĕ те Вăрмарĕ,
Ăшра юлать сăпайлă калаçу

Ĕççи çинчен, туйсем çинчен. Кĕрхи
Тулли пӳлме çинчен калать-и халăх —
Туятăп эпĕ: пур ун савăнмалăх.
Мĕнле-ха урăхла? Çапла йĕрки!

Пилеш вучахĕ. Хурăнсен ташши.
Тӳпен пĕр тĕпсĕр аварлă сенкерĕ...

Эп килтём те — эс мён кăна сёнмерён,
Чăваш çёршывё — чун-чёре ăшши.

Эп манас çук сан ыррă кăмăлна.
Сан пилўпе ялан эп пулнă сывă,
Апла пулсассăн, ман Тăван çёршывăм,
Иккёленмесёр эс те шан мана!

## ПЫЛÇЫРМА

Çитмĕл çичĕ çăлкуç —
Пылçырма,
Сулхăну сан —
Чуна пусарма.

Сăмах пур халăхра:
Чăвашран
Тарса килнĕ кунта
Ситукан.

Вăрманта ӳснĕ
Ял çине ял —
Хырлăх, Вăтăр Юман,
Хурамал.

Манăн несĕл
Юратнă йĕлме —
Çĕн Йĕлмелĕ
Пуçланă ӳсме.

Çитмĕл çичĕ çăлкуç —
Пылçырма
Чăваша савăнма,
Ыр курма.

Мĕн тери юрăсем
Ку енче!
Калăн, юрă таппи
Çăлсенче.

Кашни çăлĕ
Пилленĕ-и, тен,
Халăха пĕрер юрă
Куллен.

Çитмĕл çичĕ çăлкуç —
Пылçырма,
Эс вĕрентрĕн мана
Юрлама.

Халăха, пурнăçа
Савнипе
Çитмĕл саккăрмĕш çăл
Пулăп эп.

## ТУСЛĂХ ÇИНЧЕН

Кĕтменччĕ эп çакна.
Тăван килте
Кăшт калаçма та
Ĕлкĕрменччĕ эпĕр,
«Юлташусем камсем?» —
Ыйтать атте,
«Мĕнле-ха сывлăху сан?» —
Тенĕ евĕр.

Ыр кăмăллă аттем!
Çак пурнăçра
Чи тĕресленнĕ чăнлăх
Пур-мĕн санăн:
Тĕнче екки килет
Тус-юлташран,—
Пуян пулнишĕн мар,
Туспа эс савăн.

Хăв тантăшу,
Тусу — Миттан пичче
(Эс ун çинчен мана
Миçе каланӑ!)
Санпа çӳренĕ
Граждан вăрçинче,
Чи юлашки чĕлле
Санпа пайланă.

Эс туйнă туслăха
Тăван ялта

Хăв пек хавас йышпа
Хире тухсассăн,
Ăна эс пĕлнĕ
Сĕмсĕр фашиста
Йĕрленĕ чух
Сасартăк амансассăн.

Тус-тантăшсем сана
Пĕтме паман,
Сана çеç мар —
Çуратнă çĕршыва та...
Ак мĕншĕн
Юлташсем çинчен паян
Эс, канăç çухатса,
Манран ыйтатăн.

## ОКТЯБРЬ САВВИ

Уявăмăр чаплă! Уявăмăр аслă!
Янравлăн, хăватлăн вăранчĕ те ир —
Чунра çут хĕвел пулнă евĕр, хаваслăн,
Хастаррăн, сулмаклăн утатпăр эпир.

Эпир — Çĕршыва вăй кӳрен паттăр халăх:
Рабочи, хресчен, инженер е поэт...
Тĕнче ăмсанмалăх, тĕнче савăнмалăх
Таçта аякка пирĕн юрă вĕçет.

Утатпăр патваррăн. Кашнин утти çирĕп.
Çĕклетпĕр çӳле аслă Ленин сăнне.
Ан тив, Ильич куртăр:
тĕллевĕмĕр пирĕн
Малтан малалла — коммунизм патне.

Малашлăх çул-йĕрĕ телейлĕ те уçă,
Октябрь çути çутатать çав çула.
Тăратпăр юмах тĕнчипе куçа-куçăн —
Колхозлă ял чаплă, илемлĕ хула.

Завод-и лартатпăр, тырпул-и пухатпăр,
БАМра-и ĕçлетпĕр, тăватпăр-и ГЭС —
Совет çыннисем пултаруллă та паттăр,
Хастарлăх çăлкуçĕ нихçан иксĕлмест.

Пирте яланах Прометей вучĕ çунĕ,
Çав вут пĕтес сук, сӳнес сук ĕмĕрне!



1296
М 23334-чув.
Национальная библиотека Чувашской

Телей саманин вăя кĕнĕ саккунĕ
Çунат хушса пачĕ кашнин чĕрине.

Янра, çутă кĕвĕ, янра кĕмĕл саслăн,
Юрла, паттăр халăх, юрла чĕререн!
Уявăмăр чаплă, уявăмăр аслă,—
Хаваслăх — сенкер тӳпене çитиччен!

## ШУРĂ ХУРĂН ЮРРИ

Тăван кил. Савнă вырăн.
Пĕлейместĕп — тахçан
Асатте лартнă хурăн
Курăнать аякран.

Таврара кассăн-кассăн
Вăштăр çил вĕрнĕрен,
Ун юрри кĕмĕл саслăн
Илтĕнет инçетрен.

...Имшер саслă ачаччĕ,—
Мана хуп сăпкарах
Çурма тăлăх хăварчĕ
Хура юнлă хурах.

Асатте лартнă хурăн
Пăшăлтатрĕ ун чух:
«Пуç ан ус, ыльăм, пурăн,
Çак Раççей пĕтес çук!»

Тĕрекленчĕ çанçурăм,
Тулса çитрĕç хулсем.
Ас вĕрентрĕ шур хурăн:
«Ĕçпе чаплă этем!»

Тарласа, хура çĕрĕн
Пулăхне тупрăм эп.
Тĕрĕс, хурăнăм, тĕрĕс —
Ĕçре çеç — чăн хисеп.

Салтак ячĕ тухсассăн
(Манас çук çав куна),
Вăл пуплерĕ хавассăн,
Пехиллерĕ мана:

«Пурнăç панă Çĕршывăн
Йăлтăр çутă чысне
Сыхламашкăн ан ывăн
Виличчен, ĕмĕрне».

Йăнăш утăм-ши турăм —
Çул çухатрăм пĕрре.
Асăрхарĕ-шим хурăн,
Канаш пачĕ тӳрех:

«Йăнăша йышăнмашкăн
Ытлашши йывăр мар,
Чĕрӳне çеç пылакшăн
Пылчăкра ан хăвар».

Ун хăватлă янравĕ
Камертон пек янрать.
Эп çуралнă ялта вăл
Утаман пек тăрать.

Вӑй кӗртсе юхан юрӑ
Илтӗнсен, ҫӗлӗк хыв.
...Хурӑн, йӑрӑс шур хурӑн —
Ман хӑватлӑ Ҫӗршыв!

## ЙĔЛМЕЛĔРИ УЯВ

Якрав пичче ялта хисеплĕ,
Ялта чи ятлă пулнăран
Юрлать, шавлать, кĕрлет Йĕлмелĕ,
Урай кашти чăтать аран.

Пĕри БАМ-ран виç кунлăх килнĕ,
Тепри — нефтяник — Элметрен...
Хăни — шутлас-тăк урлă-пирлĕ,—
Мĕнпур Совет çĕршывĕнчен.

Ларать минтер çинче сăпайлăн,
Тем айăп тунăн, юбиляр.
Чыса вăл хăнăхман — ку паллă,
Анчах сăлтавĕ паллă мар.

Парторг хистерĕ: йăлтăр-йăлтăр
Кăкăр тулли çиçет медаль!
Сăпайланма мĕн айăп пултăр —
Утаман пек ларас ун халь!

Авмак-авмак кăлкан çилхиллĕ
Çӳçне тирпейлĕн турасан,
Никам калаймĕ: çитмĕл пиллĕк —
Вунсаккăрта-ха ветеран.

Анчах вунсаккăрĕ инçе-мĕн:
Савса курманччĕ-ха хĕре —
Çĕршыв кĕреннĕн те писеввĕн
Лап! хыпрĕ, ялкăшрĕ пĕрре.

Ялтан яла кăвак çĕмренĕн —
Темле чăрмав та чăрмав мар —
«Çĕр — халăха. Ульянов-Ленин» —
Ян кайрĕ, сарăлчĕ хыпар.

Якрав пичче хăй евĕр чухăн
Тертне аван ăнланнăран,
Ял халăхне çĕклерĕ: пухăн,
Тăван çĕре пайлар пĕр тан.

Калама çеç паян ак çăмăл:
Чăнне курас — çĕр пайласси
Пуçларĕ вутлă-юнлă тăвăл,
Тавралăхра — пăшал сасси.

Е шурă чех яла тустарчĕ,
Е асрĕ, çĕмĕрчĕ Колчак,
Е кĕтесрен кĕтмен «кулачă» —
Тăхлан пиллесшĕнччĕ кулак.

Якрав пичче! Вутра туптаннă
Телей яланлăх пулнине
Ялта эс чи малтан ăнланнă,
Эс шаннă Ленин партине.

Шанни, кĕтни сан пулнă çирĕп,
Çак паянхи мăнаç кĕвве
Илтессине пĕлсе, каç-ирĕн
Упранă эс ĕненĕве.

Унпа çĕнгернĕ, тырă акнă,
Колхоз пуçланă ушкăнпа,
Унпа эс фашиста аркатнă —
Мĕн кăтартмарĕ пуль шăпа!

...Мăнаçлă, ирĕклĕ, хĕвеллĕ
Телей юрри ян-ян каять.
Ветерана чыслать Йĕлмелĕ,
Вăл Ленин партине мухтать.

* * *

Тахçан, пӗрремӗш кун, эп çуралсан,
Телей куççулӗпе питне çусан,
Ырра пуль, лайăха пуль, тет, анне,
Эп куртăм, тет, çӗн уйăх гухнине.

Тахçан, пӗрремӗш кун, эп çуралсан,
Фронтри аттем çапăçăва тухсан,
Çӗкленчӗ, тет, алхасрӗ, тет, пушар,
Атте шутларăм, тет, ку ырра мар.

Паян атте эп хам. Ача çумра.
Пушар та тӗтӗм явăнмасть умра.
Çӗн уйăха хупларӗ çеç тӗтре —
Темме-çке çурăлса гухать чӗре.

ПОЭЗИ КАҪĔ

Ялти клубра каҫкӳлĕм сăвă каҫĕ
Пулать тесе пĕлтерчĕҫ Шăхальте.
...Ватти-вĕтти, арҫынĕ, хĕрупраҫĕ
Ларасшăн, акă, чи малти рете.

Пĕрин пит-куҫĕ ҫутă та сăпайлă,
Теприн сăн-пичĕ ҫирĕп те кăра.
Пĕри темтепĕр курнă пуль — сухаллă,
Тепри ҫӳренĕ пулĕ вăрҫăра...

Ав ҫав, сулахайри, доярка, ахăр,
Кӳрши, паллах, тин таврăннă рейсран.
Пĕри шанса пăхать, тепри шанмасăр:
Кăтарт, мĕн илсе килтĕн хуларан.

Сасартăк — хулăн сасă: «Ан кĕттерчĕ,
Пуҫла, поэт, янравлă сăввуна».
«Пуҫла»,— пуҫне сĕлтсе, парторг систерчĕ...
Анчах, туяп, тем пăлхатать чуна.

Тăп! чарăнчĕ ҫӳле ҫĕкленнĕ алă,
Ман сассăмпа хам мар, пуплет такам.
Каҫар, хăватлă, пултаруллă халăх,
Самантлăха эп сывлăш ҫавăрам.

Самантлăха тăрам та куҫа-куҫăн
Тахҫан тапраннă шухăша шутлам;

Тěллевĕр паллă, ĕмĕтĕр яр-уçă,
Сăн-питĕрсем илемлĕ-çке ытла!

Хăратайман сире йĕпе çанталăк,
Вĕри çапăçуран çĕнтерӳпе
Тин тухнă пек, мăнаçлă та хавалла
Ларатăр, акă, речĕ-речĕпе.

Хăш сăввăма вулас? Тивертĕ хăшĕ
Çунатлă, вутлă сирĕн чунăра?
Тăрап, намăсланса, сăмах çуккишĕн,
Вут-хĕм çуккишĕн хамăн сăвăра.

...Шутларăм эп: перо тытас пулсассăн,
Ху сăввуна çынна пиллен пулсан,
Поэт! Сан пултăр ăс та çивĕч сасă —
Пăхать хăватлă халăх куçунтан!

## ВАТĂР ВИÇÇĔ

Ак çапрĕ вăтăр виççĕ.
Чылайччен
Эп тарăн шухăша путса çӳрерĕм,
Ĕмĕтĕмри виç пайлă ĕмĕртен,
Эппин, пĕр пайĕ катăлчĕ-ха, терĕм.

Иртни çине тинкертĕм те —
Ретре
Çулсен ытарайми карти юлмарĕ.
Пĕри çĕнесшĕн пулчĕ чир-чĕре,
Тепри, ырханкkaскер, вăрçа юнарĕ.

Анчах пĕрре...
Йăл-йăл кулать анне
Çĕрулмирен пĕçернĕ те икерчĕ...
Çав кун асаплă вăрçă пĕтнине,
Эп малалла пурнассине пĕлтерчĕ.

Никам аркатайми Тăван çĕршыв
Хăй хăватне пиллерĕ: ут хастаррăн,
Чи аслă тĕллеврен ан чак пĕр шит,
Нимле йывăрлăха нихçан ан парăн.

Юратнă халăх пачĕ чĕлхине:
Юрла, сассу таса та çирĕп пултăр,
Сан сассуна илтсессĕн кашнинех
Ĕçре çĕнес хăватлă туйăм тултăр.

Телейĕм вĕсенчен çеç килнĕрен,
Эп — ĕмĕтпе çут шанчăк йĕкĕрешĕ —
Ним юлмиччен, çунса кĕллениччен
Çĕршывшăн, миршĕн, халăхшăн кĕрешĕп.

## ПИРĔН АДРЕС ПĔРРЕ

«Тракторстрой. Шупашкар» —
Пирĕн адрес пĕрре.
Ăшă мар, çăмăл мар —
Çилĕ шуххăн вĕрет.
Тулхăрать Атăл сиввĕн,
Куçа хăйăр касать.
Пĕр сăмах пирте — тивĕç —
Вăй-хал çуратать.

«Тракторстрой. Шупашкар» —
Кĕç ĕçе ямалли.
Ку пуçламăшĕ мар —
Малалли, малалли.
Магнитту, Днепрогэс-и,
Ангара е КамАЗ —
Çамрăк вăй иксĕлмест те,
Нихçан парăнмасть.

«Тракторстрой. Шупашкар...»
Ĕç тытсассăн алла,
Кашни пултăр хастар,
Кашни кайтăр мала.
Стройка пирĕн чыс мар-и
Çакна ĕмĕр асту:
Ку вăл пурнăç тымарĕ —
Таса юрату.

«Тракторстрой. Шупашкар» —
Пирĕн адрес пĕрре.

Сирпётсе хём-кӑвар,
Пиҫёхет чун-чёре.
Ҫёнтерме вёренетпёр,
Пурӑнма та ҫапла.
Умра пирён пёртен-пёр
Ҫул — малалла!

**ПУРĂНАН, ПОЭТ!**

Пултăм Çеçпĕлте те Теччĕре,
Пултăм эп Крымра та Остерта.
Вăл хăех — пин-пин, Кăвар чĕре,
Вилес çук вăл, терĕм, вăл — кунтах!

Таврăнтăм поэт çĕршывĕнчен.
Çавракa шур çăкăр, хĕм сапса,
Çынсене сӳнми телей сунса,
Ялтраса выртатчĕ килсерен.

Ирĕке саван чăваш ачин
Ирĕклĕ юрри ян-ян каять.
Сăвăçĕ те юрăçĕ пин-пин —
Ут çулать, ака тăвать, юрлать.

Çук, калаймăн: лăпкă та йăваш...
Курăр, çивĕч ухă йĕппилле
Хăйĕн ĕмĕтне тĕлле-тĕлле
Чашкăрса вĕçме пĕлет чăваш!

Таврăнтăм эп капăр Теччĕрен.
Тинĕс евĕр Атăла курса,
Шутсăр савăнса, хăпартланса,
Сăвă шăрçаларăм мĕн ирччен.

Вĕççĕр иртрĕç шур пăрахутсем,
Пин-пин сас хупларĕ таврана,
Тĕрлĕ-тĕрлĕ халăх çыннисем
Ашшăн саламларĕç Çĕн куна.

Эп вара шутларӑм ӑшӑмра:
Ҫеҫпӗл ӗҫӗ харама кайман,—
Ҫак таса, телейлӗ Ҫӗршывра
Ҫыннисем телейлӗ те пӗр тан.

Тин ҫеҫ килтӗм тинӗс хӗрринчен.
Крым хӗвелӗ сывлӑхшӑн паха.
Ҫеҫпӗл сассине те илтӗп-ха,
Терӗм ҫыранпа утмассерен.

Хумлӑ-хумлӑ кӑпӑк авӑсса,
Кӗрешме чӗнен хӑватлӑ шав
Асилтерчӗ аслӑ сӑвӑҫа.
Тинӗсӗм, мухтав сана, мухтав!

Вӑл кунтах-мӗн ӗмӗр-ӗмӗрне.
Вӑл, ав, тинӗс хумӗпе кӗрлет.
Ҫӗнӗ кунӑн ҫӗнӗ пурнӑҫне
Юратса тӑма чӗнет поэт.

Тин кӑна-ха ҫитрӗм Чӑваша
Ҫут тиреклӗ ӑшӑ Остерган.
Калаймарӑм: «Сывӑ пул, Мишша».
Ҫавна ҫеҫ калайрӑм: «Пурӑнан!»

Украина хӗрӗ сан патна
Чӗр чечек ҫыххи йӑтса пырать,
Палӑку ҫине вӑл сан ятна
Тӗрӗллӗ рушник ҫакса ярать.

Пурӑнан, поэт! Кай, вилӗм, чак!
Пурӑнан! Пӗтмен-ха ҫут тӗнче.
Эсӗ кӗрешӳ вӑйне анчах
Килӗштернӗ пурнӑҫ тӑршшӗнче!

## САЛАСПИЛС

*Эвалд Папиньш тусăма*

Амăш кĕтнĕ. Хĕрĕ гаврăнман.
Çулçă тăкнă сарăхнă вăрман.
Ĕнтĕ çавăрттарнă çил-тăман,—
Хĕрĕ таврăнман та таврăнман.

Хĕрĕ пулнă паттăр партизан.
Хĕрĕ пулнă чăн-чăн арăслан.
Савăнса ӳссе, мĕн ачаран
Çĕршыва юратнă вăл чунтан.

Амăш çуннă. Хĕрĕ таврăнман.
Çĕр тасалнă шавлă шыв-шурган.
Ĕнтĕ куç та уçнă шур тюльпан,—
Хĕрĕ таврăнман та таврăнман.

Хĕрĕ тухайман пĕр ункăран.
Тарăхнă вăл хăй аманнăран.
Юн юхтарнă, кайнă вăл ăнран...
Хĕпĕртенĕ, савăннă тăшман.

Амăш сиснĕ амăш пулнăран.
Амăшĕ васканă аякран:
«Хĕрĕм! Хĕрĕм!!»
Хĕрĕ чăтайман.
Паттăррăн куç хупнă — парăнман.

Амăшĕн чĕри чултан пулман.
Тухайман вăл çак уçланкăран.
Мрамор постамент çинчен паян
Систерет вăл кашнине: «Ан ман!»

...Саласпилс! Ăшри хӳхлевĕм ман!
Саласпилс! Сана никам манман.
Чĕресем тухасшăн кăкăртан,
Çĕр пин амăш * шăпине курсан.

* — иртнĕ вăрçăра Латвири Саласпилс концлагерьте фашистсем çĕр пин çынна асаплантарса вĕлернĕ.

**УЛА-ПАТТĂР**

Мĕнлерех цирк лаши!
Чĕнсене пит ăста ылтăнланă.
Йăлтăр-ялтăр тăвать
Ун йĕвенĕ ҫинчи ҫут ахах.

Тĕлĕнме маннă ҫын
Халь, ăна курнă чух, ҫунатланнă:
Пур-ҫке, пур, юлташсем,
Тĕнчере тĕлĕнтермĕш пурах!

Анчах акă мана
Урăххи,
Тахҫанхи аса килчĕ.
Сĕм вăрман ҫулĕсем,
Вырмари шутсăр йывăр кунсем...

Йышлă марччĕ ҫемье.
Эпĕ ҫав ҫемьере кĕҫĕнниччĕ,
Пӳрнеске-ха тесе,
Лăпкамарĕҫ мана аслисем.

Лашасем ырханкка.
Айăрсем вăрҫăран таврăнмарĕҫ.
Пурччĕ манăн та ут.
Ула-паттăр ят пачĕҫ ăна.
Паттăр пулнăшăн мар.
Унăн чăтăмлăхне кăмăлларĕҫ —

Ун, мăнтарăнăн, шав
Тулли лав —
Урапа та ҫуна.

Тăвăлра,
Йĕпере,
Ҫунтарса яракан шăрăхра та
Канăç çук ун валли.
Ыр уга ăмринчен лăпкаса,
Турта ҫӳллĕш ача,
Эп ăна пулăшма тăрăшаттăм:
«Эй, тăванăм, чăтах.
Ту ҫинче кăштах илĕн канса».

Куççулленнĕ куçсем
Ачана ăнланатчĕç пулас-и? —
«Чăт, ача,
Чăт, ватти,
Чăт, хĕрарăм.
Эп ҫитĕп тăва.
Килĕ вăхăт пĕрре.
Пурге пулĕ — телейĕ, хавасĕ», —
Тенĕ пек,
Хирĕнсе,
Ула-паттăр туртатчĕ лава.

Ун ятне халь лартас,
Асталас ун ятне пысăк палăк.
Йăнăш пулмĕччĕ, ҫук.
Пурте ҫӳрĕччĕç палăк патне.—

Пĕчĕкки, пысăкки.
Лайăхрах пĕлсе тăрĕччĕ халăх
Вăрçă питĕ асаплă,
Вăрçă питĕ хаяр пулнине.

## ТАВАХ, ТĂВАЙ!

Тавах сана, Тăвай,
тавах, Тăвай,—
Ыр кăмăллă çынсен хитре кĕтесĕ.
Ман чĕрене пăлхатрăн эс нумай
Вĕри ытамунтан ярас темесĕр.

Тавах сана, Тăвай.
Телей тӳпин
Айне хитрен вырнаçнă çĕр кĕтесĕ,
Çăлтăрусем
Пиншер ахах пĕрчин,
Çутисене инçе сапса
Çиçеççĕ.

Тавах сана, Тăвай,
ĕçчен çынсен,
Ăста та тарават çынсен кĕтесĕ,
Пуян кунçулăн алтăр-куркинчен
Телей пылне
Савса ĕçтертĕн эсĕ.

Тавах сана, Тăвай.
Хитре хĕрсен,
Чуна вут сапакан хĕрсен кĕтесĕ,
Çав вут айне ăнкайсăр лекнĕрен
Пĕрне кăна
Хампа пĕрле илес-и?

Тавах сана, Тăвай!
Вĕри çăлкуç
Тапса тăрать санра — хăватлă, çирĕп.
Çунат парса ăсатрăн. Таймапуç.
Сана эп тунсăхлăн куллен асилĕп.

## ТЁНЧЕ ТĂТĂР ХИТРЕ

Тӳпе йăлтăр таса,
Сывлăш уçă ытла!
Кĕрлесе, янраса
Вăранать ял-хула.

Кашнин сăн-питĕнче
Çутă савнăç куран.
Епле хӳхĕм тĕнче —
Май уявĕ паян.

Заводра, стройкăра
Ялавсем хĕвел пек,
Ялавсем акара
Вăркăшаççĕ çилпе.

Çĕнтерӳ паллисем
Курăнаççĕ таçтан,
Ывăнми паттăрсен
Ĕç уявĕ паян.

Çут хĕвел шевлинче —
Хăмачсем, хăюсем...
Кур, кашнин аллинче
Чĕнӳсем, йыхравсем:

Лăпкă тăтăр тĕнче,
Вут ан тухтăр нихçан! —
Çĕр-планета çинче
Мир уявĕ паян.

...Ян! янра пирӗн сас,
Пул сулмаклӑ, хиврe.
Тӗнче тӑтӑр хавас,
Тӗнче тӑтӑр хитре.

* * *

Мухтав сана, пӗрчӗ,
Эс пурнӑç хӑвах.
Эс шӑтӑн, эс ӗрчӗн,
Кӗттермӗн вӑрах.

Ем-ешӗллӗн тухӑн.
Çурхи тӗнчерен
Е ӑшӑ, е сулхӑн
Эс ыйтӑн куллен.

Çӗкленӗн патваррӑн
Çӳлтен те çӳле,
Çапла пуç кӑларӑн
Çу çитнӗ тӗле.

Хаваслӑн хумханӑн
Хӗвел хӳттинче.
Пӗрре эс кун парӑн
Вӗр-çӗнӗ пӗрче.

Йӗс пек çирӗпленӗн,
Эс куçӑн тырра,
Ахахӑн, хӗвелӗн
Çутатӑн вара.

Çав çутӑ пуль кӗчӗ
Поэт чӗрине.
Мухтав сана, пӗрчӗ,
Мухтав ӗмӗрне!

* * *

Ан вăрçăр манăн ăрăва,
ан вăрçăр,
Хиврe пулсан, тӳррен перет пулсан.
Пуçламăшне асилĕр —
хĕрӳ вăрçă
Ана çапла ӳстернĕ ачаран.

Ан чарăр манăн ăрăва,
ан чарăр,
Вăл хăй çине нумай илет пулсан,
Çĕршывăм умĕнче ун пысăк парăм,
Çавна туйса ĕçлет вăл пур вăйран.

Ыр сунăр манăн ăрăва,
ыр сунăр,
Тĕллев патне хыт ыткăнать пулсан,
Чĕри çуталтăр, хĕвел евĕр çунтăр,
Вĕри хĕмне çынсемшĕн салатса.

## УРХАМАХПА ЮЛАНУТÇА

«...Чёрный конь умирает
на белом снегу...»

*К. Кулиев.*

Çĕр салтак,
Пин салтак,
Рет те рет...
Сар тусан
Хыçалта
Вĕçтерет.

«Малалла!
Малалла!» —
Тет трубач.
Ыткăнать
Тăвалла
Юрăпа:

«Ыткăнах,
Вирхĕнех,
Урхамах,
Санпа ман
Пĕр тĕллев,
Пĕр сăмах.

Санпа эпĕр
Хисеплĕ
Ретре,

Пулас тетпĕр
Ялан
Ирĕкре.

Санпа манăн
Тăшман халь
Пĕрре —
Таптаса
Ирсе кай
Ирсĕре!

Вĕçтерех,
Вĕçтерех,
Вĕçтерех,
Эп çĕклем
Ялава
Çӳлерех.
Вĕçтерех,
Анчах çул-йĕр
Тăрук
Татăлсан,
Çăлтăр евĕр куççулĕ
Типмесĕр юлсан,—

Пĕл: санпа эпĕр
Иккĕн
Нихçан парăнман.
Пĕл: санпа эпĕр
Вирлĕн
Кĕрешнĕ ялан.

Пĕл: санпа эпĕр
Çулнă
Хĕнпе хурлăха.
Пĕл: санпа эпĕр
Çăлнă
Тăван халăха».

...Çĕр салтак,
Пин салтак —
Рет те рет...
Сар тусан
Хыçалта
Вĕçтерет.

Чим, мĕн пулчĕ?
Трубач,
Сасна пар!
Эй, хăюллăн,
Трубач,
Янраттар!

Анчах çук...
Ĕнтĕ
Чĕмсĕр
Труба...
Юнпа витĕнчĕ
Ешĕл
Хупах.

«Эх, ыр тусăм,
Хура урхамах,
Калаçасшăнччĕ —
Пĕтрĕ сăмах.
Вирхĕнесшĕнччĕ
Çĕнĕ вăйпа,
Йыхăрасшăнччĕ —
Ӳкрĕ труба.

Ав килет çывхарса
Шурăмпуç.
Эх, курасчĕ те,—
Хупăнчĕ куç.

Пулинех!
Эпĕр иккĕн
Нихçан
Парăнман.
Сывă чух эпĕр
Вирлĕн
Кĕрешнĕ ялан.

Сывă чух
Эпĕр çулнă
Хĕнпе хурлăха.
Сывă чух
Эпĕр çăлнă
Тăван халăха!..»

## ТĂВАН ЯЛĂМ

Вăл паттăр çынсемпе илемлĕ,
Çĕрле — тӳлек, ĕçре — вĕри.
Ларать ман ялăм — Çĕн Йĕлмелĕ—
Чи лайăх ялсенчен пĕри.

Кĕрнек çанçурăмлă, вăй-халлă,
Ĕçе тухсассăн арçынсем,
Çĕр чĕтренет пек.
Ĕнтĕ паллă —
Пит пысăк ĕмĕт ку ялсен.

Йĕлмелĕшĕн уяв çитес-тĕк —
Пĕлет урай кашти авма.
Кĕр сăрине, юлташăм, эс те
Çĕн Йĕлмеле пыр хĕр пăхма.

Урамĕсем — çип çапнăн — йăрăс,
Касси-касси вĕр-çĕнĕ çурт.
Ман Çĕн Йĕлмелĕ — çĕнĕ юрă,
Çав юрăра ман сас та пур.

Вăл пысăках та мар, ман ялăм,
Пĕр виççĕр килĕ çеç — ан тив,
Шăпах Йĕлмелсемпе мухтавлă,
Пуян та çирĕп ман Çĕршыв.

## ÇУЛ ÇУТАТСА

*М. П. Михеев*
*ученăй-физик*
*çутă сăнарне*

Такам пулаттăм эп,
                    таçта пулаттăм
Хам пурнăçра сана курман пулсан.
Вĕрентекенĕм!
Манăн вăй-хăватăм,
Кăшт каярах пулин те,
Ил манран
Хĕвел пайăркинчен пуçтарнă кăшăл —
Саваттăн эс тĕссен çут вăййине.
...Паян та эп куратăп
                    санăн мăшăр
Чĕп-чĕрĕ куçусем çуталнине.

Ах, ĕмĕрхи пĕр шелсĕр çутçанталăк,
Эс тепĕр чух ытлашшипех кăра.
Çак пурнăçа уçатпăр кăна алăк —
Ăна эс васкаса хупма тăран.
Этем çине витен те шур шăналăк,
Ят çеç унран,
Ят çеç эс хăваран.

Вĕрентекенĕм!
Сан яту та чĕрĕ,
Эс пин вĕренекенĕн чĕрине
Ху çутнă çăлтăрпа килен каç-ирĕн,
Эс вĕсенех халь пурăнма чĕнен:

Пурнас-тăк —
пĕр юлми çунса кайса!

Пурнас-тăк —
нăйкăшмасăр, парăнмасăр!
Пурнас пулсассăн, ĕмĕр пурăнсамăр
Çул çутатса!
Çул çутатса!

## УМĔНХИ

Çулталăкра пĕрре килен çак тапхăр
Çĕклентерсе уçса ярать чуна.
Çырмасенче çиçсе ялтрать кăвак пăр.
Тумла пат-пат тумлать яра куна.

Хура сăн çапнă пусрăнчăк юра та
Çиет пĕр хĕрхенмесĕр çут хĕвел.
Курак, ав, краклатать садра, куратăп,—
Ĕçе пикеннĕ пакăлти эртел.

Хумпа кăтраланса вылять кӳлленчĕк,
Кас-кас килен çил сулчă та кăра,
Турат çинчен пăр ӳкрĕ те тĕпренчĕ,
Пуçланчĕ ăсан туйĕ таврара.

Ку — умĕнхи. Кĕçех çурхи çанталăк
Тапранĕ кĕрлесе, шатăртатса.
Ку—умĕнхи. Çак тапхăр маншăн савăк,
Унра хăватлă вăй тăрать тапса.

## ӲКЕРЧĔК

Атăл çилĕ — ăштăр уçă çилĕ —
Кăтăклать пите, кĕлеткене.
Йăлăмри вăрман — сап-сарă тилĕ —
Тек юртать, юртать тĕнче хĕрне.

Кунта ГЭС гăваççĕ. Йăрăс, çӳллĕ
Кран тăрать — асамçăпа пĕрех,
Чуптăвать çине-çине хĕрӳллĕн
Хĕвеле пĕрре, тепре çĕре.

Сисрĕм эпĕ çыранта тăруçăн:
Ав, мĕнле тăваççĕ ГЭСсене —
Васкаса ăсать кран ывçăн-ывçăн
Иксĕлми хĕвел хĕрӳлĕхне.

## МУНЧА

*(С. Викулов майлă)*

Арçынсем килеççĕ акаран,
Ывăннă, çапах хастар утаççĕ.
Каç енне хĕрарăмсем паян
Вĕсене валли мунча хутаççĕ.

Арçынсем килеççĕ акаран.
Тар ӳте касать, ĕшеннĕ пилĕк.
Тăват кун, тăват çĕр çывăрман,—
Ан кĕттерĕр, часрах парăр милĕк!

...Тикĕс кĕвĕ меллĕн шăранать,
Темиçе курка ăшши параççĕ.
Ăшалаççĕ кирĕк-тусана,
Эх, вĕри те çав — епле чăтаççĕ!

Çапăнать кĕрнеклĕ сар мучи,
Сивĕ шыв ярать хăй пуçĕ тăрăх.
Ну, аван та çав паян мунчи —
Кăмăлсăр пулса епле-ха тăрăн?

Арçынсем, хĕрелнĕ çырла пек,
Мунчаран хаваслă таврăнаççĕ,
Тăкăнать йӳçсе сăра-шерпет,
Арçынсем пур кăмăлтан юрлаççĕ:

«Ёшерет те хумханать ҫăкй,
Илĕртет куҫа мĕнпур тавралăх.
Вăхăтра вĕҫленчĕ ҫураки,—
Кĕр сĕтелĕ пулĕ ăмсанмалăх!»

## ÇЫННА КИРЛĔ ЮРĂ

*   *   *

Çынна кирлĕ пĕлĕт,
Çынна кирлĕ шанчăк,
Çынна кирлĕ ĕмĕт,
Çын ĕмĕтсĕр — ванчăк.

Пĕлеп — хаклă пурлăх:
Утмашкăн çĕр тăрăх
Çынна кирлĕ туслăх,
Тус-йышсăр çын—тăлăх.

Паяншăн, ыраншăн
Çакна каргса хурăр:
Туллин пурăнмашкăн
Çынна кирлĕ юрă!

## УЯВ ЮРРИ

Юр пуçласа юрларăм,
Пит шух тесе ан калăр.

*Халăх юрринчен.*

Епле вăл хӳхĕм те чĕп-чĕрĕ
Чăваш юрри,
Уяв юрри!
Ак çакăн пек пулать пуль хĕрĕн
Хăй савнине парас тĕрри.

Епле вăл çутă,
Йăлтăр çутă!
Унра — чăваш чĕри çунни.
Чăнах, ун чухлĕ вăйă çук-тăр
Кăвак хуппи ялтăранин.

Епле сăпайлă вăл,
Атьсемĕр,
Ав, курăр, йышăнмасть шуха,
Çăл çӳп-çапа «тиркенĕ» евĕр,
Кĕртмест вăл майсăр сăмаха.

Вăл кивелмест.
Вăл шăнкăр-шăнкăр
Юхать мĕн ĕмĕр гăршшĕпех,
Çӳл тӳпери чи çутă çăлтăр
Тахçан тапратнă ташши пек,

Епле вăл ăслă та сăнарлă!
Вĕрен, çыравçă, халăхран.
Сăвву чĕп-чĕрĕ те сăпайлă,
Янравлă, çутă пултăр сан.

**САПКА ЮРРИ**

Ан шавлăр, ватă чăрăшсем,
Ан çапăр çырана, хумсем.
Ан чĕриклетĕр, шăрчăксем,
Ан вĕçĕр, чĕвĕл кайăксем.

Хĕвелĕн ăшă аллисем,
Кунта ан çӳрĕр, кайăрсем.
Çилпе ан кашлăр, чечексем,
Çунат ан çапăр, лĕпĕшсем.

Шăп пулăр, ырă кӳршĕсем,
Çитерĕр тӳсĕм, тăвансем,—
Ман пĕчĕк хĕрĕм çывăрать,
Тĕлĕкĕнче сире курать.

* * *

Тавралăх кĕрлесе вăраннă майăн
Каллех хаваслă пурнăç пуçлама
Вĕçсе килет карти-карти хуркайăк
Çурхи ытарайми çĕршывăма.

Кайри — мала, малти — кая! Килсемĕр,
Итлегĕр хӳхĕм юррăра тĕнче!
...Паян ирпе, туссем, пуçланчĕ тепĕр
Вĕр-çĕнĕ çаврăм пурнăç тăршшĕнче.

## ÇАВ ÇУЛ

Халь пĕлсе пĕтер ĕнтĕ çанталăк
Хăш сехет, хăш кун пăсăлнине.
Малтан çурĕ çумăр икĕ талăк,
Кайран çурĕ çумăр ик эрне.

Шăнкăрав çакса çӳрен çу кунĕн
Хăшĕ пулчĕ юлашки юрри? —
Пĕр текерлĕк макăрчĕ ял çумĕн,
Айăплăн тем шăхăрчĕ тăри.

Аслати шартлатрĕ. Пĕтрĕ юрă.
Юхрĕ çумăр, вĕççĕр куççуль пек.
Ир эрне вăл çурĕ, уйăх çурĕ —
Çу вĕçленчĕ. Çу пулмарĕ тек.

Шав шанатпăр. Шав теме кĕтетпĕр.
Анчах... Çумăр чалăшшăн çапать.
«Сывă пул!» теме ĕлкĕрейместпĕр—
Тем каять яланлăх, тем юлать.

* * *

*Петр Андреева*

Эп пултăм сан кĕрекӳнте.
Эрех-сăра ĕçме пыманччĕ,
Чăваш юрриччĕ — тĕпелте,
Темрен те çывăх тăван сасчĕ.

Эп пултăм сан кĕрекӳнте,
Симпыл пек юрă юхрĕ мар-и,—
Чуна, юна, ăса, ӳте
Çав юрă харăс тыткăнларĕ.

Ман несĕл мар-и куçăмран
Пăхса, юрра кĕме хистерĕ.
Хам сассăм вăйсăр пулнăран
Юрра пăсма хăю çитмерĕ.

Эп пултăм сан кĕрекӳнте...
Йĕрет, йĕрет салхуллă шăпăр,
Кĕсле хӳхлет — чĕре кӳтет.
Шыв сыпнă пек, эп лартăм шăпăрт.

Тавах сана. Чун тĕпĕнчи
Хĕлĕхĕме савса ĕнертĕн.
Мана эс халăх умĕнчи
Тивĕçĕме пĕлме вĕрентрĕн.

## КАЯТПĂР!

*И. Кашежева майлă*

Каятпăр! Эх, каятпăр,
Каятпăр инçене.
Хавасланса юрлатпăр
Хăюлăх юррине.

Кĕрĕк мар тумтирĕмĕр —
Комбинезон — çире.
Кĕтех эс, Çĕпĕр çĕрĕ,
Çамрăксене, пире.

Эпир паян нумаййăн,
Кĕрлет перрон, шавлать.
Оркестр каланă майăн
Çĕр хăй те тайăлать.

...Шăп çак самант вăл тухрĕ.
Шуркам хăй — пичĕ çук:
«Çитмешкĕн пин-пин çухрăм»,—
Пуçларĕ калаçу.

«Унта салху пиг пурнăç,
Пĕр канăç çук унта...
Эп хам куçпа хам курнă,
Тертленнĕ çухута.

Шутлатăр пуль: çурт янтă,
Шутлатăр пуль: укçа.

Атьсемӗр, улталантӑр,
Унга ҫил ҫеҫ хуҫа.
Хаҫат ҫинче вӑл туслӑх,
Эп хам ӑна курман.
Ак ӗнтӗ шӑп пӗр уйӑх...
Эп таврӑнтӑм унтан...»

Суятӑн! Ух, суятӑн!
Каях, пиртен те тар!
Эс ху чунна сутатӑн
Виҫ пусшӑн ним те мар.

...Каятпӑр. Ал сӗлтетпӗр.
Кӗтех, кӗтех, уй-хир!
Юрӑсемпе тӗллетпӗр
Тӳрпилӗке эпир.

## ÇĔНТЕРНĔ ЁМĔТ

Завод пуçланчĕ чăн та паттăр:
Урать хĕл.
Хĕрĕх градус сивĕ.
Анчах тапратрĕ экскаватор
Симфони пек хăватлă кĕвĕ.

Çак кĕвĕре йĕс чан çаппи те,
Сăпка юрри те пулчĕ пулĕ.
Шăн çĕр тĕпренчĕ шитĕн-шитĕн,
Хĕм сирпĕтрĕ хивре вутчулĕн.

Завод пуçланчĕ! Çĕлĕк хывăр!
Пуç тайăр çĕр çĕклемĕ умĕн! —
Хăш чух, пĕлетĕп, пулĕ йывăр.
Хăш чух, чăнах та, çăмăл пулмĕ.

Анчах кабинăра, куратăп,
Йăл-йăл кулса ĕçлет те йĕкĕт:
Чунтан-вартан шанса тăратăп —
Çĕнтерĕ ёмĕт!
Чаплă ёмĕт!

## КАЛАÇМАРĂМĂР ÇĂКĂР ÇИНЧЕН

*Дмитрий Михлеева*

Япăххи манăçать пуль иккен...
Каласмарăмăр çăкăр çинчен.
Сукмакпа утнă чух ик енчен
Пучах çеç çапрĕ пирĕн питрен.

Пуш сăмахăн пĕтмерĕ тĕрки —
Шав тавлашрăмăр космос пирки.
Те тулличчĕ, те выçă пучах? —
Çак аса та килмерĕ пачах.

Тăван ял... Тăван хир... Укăлча...
Чим, мĕскершĕн талт! тапрĕ чĕре?—
Юнаса ăсатать пек пире
Вăрçă хыççăнхи вăйсăр ача.

## МЕН ПУР-ШИ ПИРЁН ТУСЛĂХРА?

*Толя Ефремова*

Сасартăк кăмăл хуçăлсан,
Эп чăтаймарăм, тӳсеймерĕм,
Сана эп чĕнтĕм Вăрмарган,—
Мана эс вăхăт çук темерĕн.

Чăтма çук савăнăç килсен,
Пĕччен хавасланас килмерĕ,
Сана эп хăпăтрăм ĕçрен,—
Мана эс вăхăт çук темерĕн.

Мĕн пур-ши пирĕн туслăхра?
Чи-чи хакли вăл, тусăм, эсĕ.
...Çитейĕп-ши эп вăхăтра
Мана эс хăв патна чĕнсессĕн?

## ХЁЛПЕ СЫВПУЛЛАШНИ

Хёл мучи валли çитмерĕ ахăр
Нарăсра шăп икĕ-виçĕ кун...
Кутсăр-пуçсăр тăвăл кăлармасăр
Кăмăлĕ тулаймĕччĕ-ха ун.
Ак паян — çурхи пĕрремĕш уйăх.
Кур — асфальт çинчи кӳлленчĕке
Килсе чăмнă, акăш-макăш туйăн
Кĕрлевне кĕтсе, Хĕвел-пике.
Анчах мĕн ку!
Лашисем ырман-и,
Юлнă-и хăвачĕ Хёл мучин?
Кĕрлесе тăрать Лакрей вăрманĕ,
Чуптарать вăл чаплă катаччи.
Пур-мĕн унăн çăлтăрлă çути те —
Явăнать хыçра чĕркĕмĕл юр...
Ĕнтĕ эсĕ çĕнĕрен чун илтĕн,
Анчах чим-ха, кучченеç те пур.
Юрпике сĕнет сана: «Тăрхасшăн»,—
Пăсланса тăран асамлă чей,
Е ак — авалхи сăпай чăвашăн
Йăлипе — сăра сана...
Эй-эй,
Темĕн тĕшмĕртсе ан пăх, пикеçĕм,
Пурпĕрех вăлтаймăн хусаха.
Юрпике хĕлле кăна вăл, теççĕ —
Юрату пыраймĕ вăраха.
Пĕрех хут çитерччĕ ăшă кукăль,
Е икерчĕ сĕн мана паян.

...Сăнĕ пĕрлĕхен пек, тумĕ шукăль —
Чун-чĕри те пулас çук юртан.
Карусель вĕçес пек. Вĕтĕ халăх
Пĕлеймест ниçта кайса кĕме,
Хĕл уявĕ — пурте ăмсанмалăх,
Чылайччен кайран аса илме.
Кĕр-кĕрлет, янрать Лакрей вăрманĕ!
Пурнăç карусель пек çавăрнать:
Хĕл Мучи каллех килне ăсанĕ,
Тунсăх çук — çур кунĕ çывхарать.

## ТАСАЛĂХ

Тасалăх, тасалăх, тасалăх
Ыйтатăп хамран та тусран.
Тасалăх —
тăшман ăмсанмалăх,
Килйыш савăнмалăх ялан.

Анне сĕчĕ евĕр тасалăх!
Тухас темесен кĕлмĕçе,
Çынсем çине гӳррĕн пăхмалăх
Тасалăх —
чи тĕрĕс виçе.

Чĕрем ан пăлхантăрччĕ шиклĕ
Туссем юнашар пулнă чух,
Чуна варалать икĕпитлĕх,
Варланчĕ-тĕк — сумĕ ун çук.

Тасалăх, тасалăх, тасалăх
Е пысăк, е пĕчĕк ĕçре,
Чеелĕхпе витĕнĕн:
халăх —
Чи сисĕмлĕ, аслă тӳре.

Хăйне йӳнетсе яраканăн
Чĕри пайланать çурмалла.
Ан чĕнĕр, ан ӳкĕтлĕр —
манăн
Тĕллев патнелле утмалла.

Çав çул çинчи тусăм — гасалăх.
Хĕвел йӳппи пек карăнса,
Ахаххăн çутаттăр вăл, савăк,
Çынна сиплĕ ăшă парса.

* * *

Иртнӗ-пӗтнӗ те, мантӑмӑр, тетпӗр.
Ҫук-мӗн. Вӑхӑт пӗрех асӑрхать,
Кашни ҫын ячӗпе вӑл, атьсемӗр
Хӑйне евӗрлӗ палӑк лартать.

Мӗн сана? Пархатарлӑ металл-и,
Мӗн сана — е ахах, е мерчен? —
Суйласа илмелли минералӗ
Йӑлт килет этемрен хӑйӗнчен.

## ТĂРНАСЕМ ВĔÇСЕ ИРТРĔÇ

*Ывăлăма, Сережăна*

Сисгермен, кĕттермен
Çуркунне килсе çитрĕ.
Тăрна шурĕ çинчен
Тăрнасем вĕçсе иртрĕç.

Те çухатрĕç çулне,
Те килне тупаймарĕç? —
Тăрна шурĕ çине
Таврăнасшăн пулмарĕç.

Чимĕр! Юлăр каллех!
Чимĕр! Мĕн хăтланатăр?
Мĕншĕн куçкĕретех
Пĕччен çи хăваратăр?

Йăлтăркка юррăра
Ман текех илтес мар-и?
Хĕм сапан ташшăра
Ман текех курас мар-и?

Эп тĕнче юррине
Сирĕн юррăр пуль, геттĕм.
Эп хĕвел ташшине
Сирĕн ташшăр пуль, теттĕм.

Мăшăр-мăшăррăн — эх!—
Ыткăнса хĕпĕртÿллĕ

Манӑн пуҫ тӗлӗнчех
Эсӗр вӗҫмӗр-и ӳлӗм?

Эсӗр вӗҫнӗ чухне
Ман чӗре те вӗҫетчӗ.
Сире ырӑ чухне
Ман чӗре те сиҫетчӗ.

...Систермен, кӗттермен
Ҫуркунне килсе ҫитрӗ.
Тӑрна шурӗ ҫинчен
Тӑрнасем вӗҫсе иртрӗҫ.

Мӗн пулса иртнине
Ӑнланмасӑр, вӑраххӑн,
Тӑрнасем вӗҫнине
Пӑхса юлтӑм хӑраххӑн.

КАМĂЛ САВВИ

Сар саппунлă, сарă тутăрлă,
Çут куççуллĕ кĕркунне
Ылтăн туй тăвать те хурлăхлăн
Майĕпен хывать тумне.

Сарă питлĕх янăрать-и ку? —
Пат! ӳкет те панулми,
Кунсерен те талăк-талáкăн
Тем каять ним таврăнми.

Кайăк хур кас-кассăн иртрĕ те,
Сассинче мĕн? Илтрĕр-и? —
Те малашлăхăн кĕвви ĕнтĕ,
Те асаилӳ юрри?

Сар саппунлă, сарă тутăрлă,
Çут куççуллĕ кĕркунне,
Тунсăхпа килен те, тунсăхлăн
Хăваратăн чĕрене.

## ТУСЛĂХ КАÇĔ

Хусан. Булакăн сулахай çыранĕ.
Малтанлăха хăнашăн пурте ют.
Пулин. Эс аякран-и, çывăхран-и —
Паян сан тăван кил — пединститут.

Кунсем, черет тăрса, пĕрмай шăвассĕ —
Аçтан пурне те астуса юлан!
Анчах пĕрре пĕлтерчĕç:
— Туслăх касĕ
Институтра ирттерĕпĕр паян.

Шутлатăп халь:
Хыçра миçе çулталăк!
Эп пурпĕр манаймастăп çав каса.
...Каç чатăрне çурса, уçайрăм алăк —
Юмах тĕнчи алчратрĕ ман куçа.

Кунта юлташăмсем утса çӳреççĕ.
Сăпайлă сасă: «Иртĕр, килĕрсем»...
Кунта ман чĕрене юхса кĕреççĕ
Çут асамат шевлиллĕ кĕвĕсем.

Эп сабантуй юрри хальччен илтменччĕ,
Курманччĕ эпĕ пушкăрт курайне.
Ак — çармăс хĕрĕ. Чăтаймасăр евчĕ
Эс ярăн ашшĕ-амăшĕ патне.

Мĕнле ташлать лезгин пĕр ыванмасăр,
Мĕнле юрлать казах хăй юррине!

«Эй, чăвашсем! Сире черет. Тухсамăр»,—
Пире чĕнеççĕ вăйă картине.

Эппин, вуншар çул чаршавне сирсемĕр,
Курсамăр: паян кун та чип-чипер,
Чи аслă юрату ĕлкийĕ евĕр,
Эпир тухатпăр — Нарспипе Сетнер.

Хĕн-хур тĕнчи пире куçа хуптарчĕ,
Мул хуçисем нумай кăтартрĕç терт.
Паян çĕрме пуян та çук, çук тарçă,—
Сӳнми телей çинчен юрлас килет.

Унтан Тахирпала Зухра тухаççĕ —
Узбекăн та юратăвĕ вĕри...
Институтра паян пин кĕвĕ каçĕ,
Пĕри шăпланчĕ — пуçланать тепри.

...Пĕтет концерт.
Чан çаппи пек мăнаçлă
Янрать пĕр юрă — шăнăçмасть зала:
«Сарлака Тăван çĕршывăм, аслă...» —
Пĕр чĕлхепе юрлатпăр — вырăсла.

Çапла пур халăхпа хăватлăн, çирĕп
Алран-алла тытса — уйраяс çук! —
Юрланă пулĕ аттесем те пирĕн
Çĕршывăма вутран сыхланă чух.

* * *

Çăлтăрсем пуçланă вăйă,
Сар хĕрсем катаççĕ мăйăр,
Каçхи хăмăр урампа
Ыткăнса чупать шур ăйăр.

Ăшă çумăр çунă-ши?
Тен, ку тăван ял ăшши?
Сăмсана кĕрет сĕтеклĕ
Тин çеç сунă сĕт шăрши.

Ăс вĕрентрĕ кўршĕ хĕрĕ:
«Çамкăра ытла ан пĕрĕр,
Ак вăл сирĕн гăван çĕрĕр,
Тек тĕнче касса ан çўрĕр...»

Ырăпах каларĕ-ши,
Е кăшт тăрăхларĕ-ши?
Ай-хай çак иккĕленў
Лăпланма май парĕ-ши?

## ТĔНЧИ ÇАПЛА...

Кашнин хĕвелĕ те тӳпи хăй евĕр.
Пиншер тĕнче çак аслă тĕнчере.
Камах-ши эпĕ хамăн çут хĕвелсĕр,
Тӳпесĕр, çăлтăрсăр? Кĕрешӳре!

Анчах та пĕр тĕнче çеç çынна хĕсĕк,
Кĕретпĕр пĕр-пĕрин тĕнчисене.
Пĕрле пулсан, телей те вĕçсĕр-хĕрсĕр,
Пĕрле пулсан, инкек те — мур çине.

Тĕнчи çапла. Хавалĕ, хĕнĕ, терчĕ
Килет этемлĕх пысăк тĕнчинчен.
Вăл çутă, сарлака пулсан тем пекчĕ,
Телейĕ тăкăнсанччĕ хĕрринчен.

## ЭС ÇИРĔМ ИККĔРЕЧЧĔ

*   *   *

Эс çирĕм иккĕреччĕ,
Эп çирĕм иккĕре.
Шап-шурă çеçкереччĕ
Садсем Йĕлмелĕре.

Хăватлă та таса-мĕн
Çурхи тĕнче юрри!
Асаплă каç асамĕ
Вĕри, вĕри, вĕри...

Тавралăх шăп пĕр хушă
Е — тăвăллă тепре.
Çак аслă тĕлпулушăн
Çуратнă-ши пире?!

Пĕри теприсĕр тăлăх
Ик çын пĕрлешнипе

Сиксе чӗтрет тӑп-тӑрӑ
Çут çӑлтӑрлӑ тӳпе.

Эх, пилӗ те тивлечӗ
Нумай çак тӗнчере!
...Эс çирӗм иккӗреччӗ,
Эп çирӗм иккӗре.

* * *

Эп сана манса каяс пулсан,
Типĕччĕ çаран.
Эп сана манса каяс пулсан,
Пăхас çукчĕ
Тус-тăван
Тӳррĕн куçăмран.

Эп сана манса каяс пулсан,
Тухăçран
Çут хĕвел хăпармĕччĕ ыран.
Эп сана манса каяс пулсан,
Чечек марччĕ пурнăç ман —
Пулĕччĕ... мăян.

* * *

Кам ку мана йыхăрать?
Кам йыхăрать?
Эсĕ манпах. Эс çывăхрах.
Эс — аякра.

Сан уттупа
Шуса иртрĕ те пĕлĕт —
Тасалчĕ.

Сан сассупа
Пăшăлтатрĕ те çумăр —
Шăпланчĕ.

Сан кĕпӳне
Уртса ячĕ те çĕмĕрг —
Вăтанчĕ.

Сан юрруна
Тăсса ячĕ те шăпчăк —
Çухалчĕ.

Ăçта сан утту халь?
Ăçта сан сассу халь?
Ăçта сан юрру халь?
Ăçта?

Курăк çилпе тайăлать.
Нăрăлтатать пыл хурчĕ.

Кам ку мана йыхӑрать?
Чӗнекенни кам пулчӗ?

Кам ку мана йыхӑрать?
Кам йыхӑрать?
Эсӗ манпах. Эс ҫывӑхрах.
Эс — аякра.

**КĔР ЧЕЧЕКĔСЕМ**

Кĕлленеймен кăвар ку — çил çинче
Йăлтăртатса выртать сад пахчинче.
Çителĕксĕр те пулĕ ун валли
Кĕрхи хĕвелĕн йăмăхнă шевли.

Çапах та, хĕм сапса енчен енне,
Çатăртатса çунать те çак вучах —
Эп ăнланатăп вăхăт мехелне,
Пĕлетĕп эпĕ: кĕр ăшши пурах.

Çу кунĕсем лӳшкетнĕ çумăра,
Çиле тӳссе ирттернĕ чечексен
Шалти вăй-халĕ те хăватлăрах,
Шăрши те ырăрах пулать-и, тен?

Çунать, çунать, çунать йăлтăртатса,
Кĕрхи вучах, кĕрен вут-хĕм сапса.
Чĕрем, кам айăплĕ сана паян,
Кăштах кая юлса çунан пулсан?

*  *  *

Йĕпкĕн хĕрлĕ, хĕрлĕ чечексен
Çулăмла ташшийĕ вĕçленсессĕн,
Ташшăн малалли пек, ерипен
Тухрăн эсĕ.

Çулçăсен кĕвви — мĕнпур енчен,
Кассăн-кассăн çил вĕрсе иртсессĕн.

Кěввěн малалли пек, майěпен
Килтěн эсě.

Тав сана! Чун хӳхлевне пěлен,
Эп сунман сана кěтсе илессěн!
Лар мансла.
Анчах хуллен-хуллен
Çěтрěн эсě.

Кайрăн. Кил ыран апла пулсан,
Мěн тери кун лайăх эс килсессěн!
Тěлпулу малалли пек паян
Пултăн эсě.

* * *

Кěрхи чечек — кěрхи кăвар.
Садра ик çын... Хавасла кулă.
Таçта çухалчě ăнланулăх:
Те эсě ку, те эсě мар.

Пăлхавлă каç кěрет юна,
Йăлтăртатать тěтреллě уйăх.
Çук, эсě мар! Тěтреллě туйăм
Тăлларě пулмалла мана.

Тумхахлă пурнăç тиевне
Чăтма-тӳсме хал çитнě пирěн,
Шăкăлтатса çеç каçăн-ирěн
Чуптарě пурнăç малашне.

* * *

Те кая юлчĕ яшлăх манăн,
Те сывă мар чĕрем? —
Курнаççĕ çывăххăн, тăваннăн
Кĕр чечекĕсем.

Те юратап теме пĕлмесĕр
Хальччен çӳренĕçем
Чуна вăратрĕç, систермесĕр
Кĕр чечекĕсем.

Çапах та... Айăпĕ ку çеç-ши,
Е вăл санра-и, тем?
Сан чуну пек тасан çиçеççĕ
Кĕр чечекĕсем.

Эс ил манран, эс ил, чиперĕм,—
Пысăках мар парнем,
Асамлă асамат кĕперĕ —
Кĕр чечекĕсем.

* * *

Кăвак хуппи хăйех эс пултăн мар-и маншăн,
Лап! хыпрăн та таçта çухалтăн шăплăхра.
Ун чух пĕр утăм сан патна пусма хăйманшăн
Куллен чĕрем çунать, куллен çунать вутра.

Кĕтмен серепене çакланнă кайăк евĕр,
Ак халь çӳреп, çӳреп, кĕтсе те тĕмсĕлсе,
Чуна лăплантарма пултаракан пĕртен-пĕр
Çав саманта каллех тĕл пулмăп-и тесе.

* * *

Пурнаттăмăр. Кулаттăмăр. Юрлаттăмăр.
Саваттăмăр. Ĕçлеттĕмĕр хĕрсе.
Е ним çукран каçса кайса вăрçаттăмăр,
Пĕрне-пĕри каçарасса пĕлсе.

Мухтаттăмăр. Хурлаттăмăр. Сивлеттĕмĕр.
Тупаттăмăр çапах та пĕр чĕлхе.
Чĕнмен чухне сывланине илтеттĕмĕр
Пăсмастчĕ çакă пирĕн канлĕхе.

Эс çук паян. Вăрçни те, савăнни те çук.
Çук юрлани, çук ассăн сывлани.
Мĕн пуранни? Мĕн сансăр пуранни? —
Çунатсăр, вăйсăр эпĕ эс çук чух.

*   *   *

Чĕре хӳхлевĕ санăн сассунта.
Мĕскер çаплах сан сассуна чĕтретрĕ?
Чĕнмерĕ телефон. Вăл çĕр хута
Аманнă кайăк чĕппи пек шиплетрĕ.

Ӳкетĕп ĕнерхи, е унчченхи
Асаилӳ çине: хире ушатăн,
Имшер туналлă пучах пек курнатăн
Ытла тумхахлăран кунçул сухи.

Пучах та выçă. Шăрăх — майĕ çук.
Хăрушă шăплăх çеç вĕçĕ-хĕррисĕр,
Савса хӳтĕлекен атте сассисĕр...
Ку — вăрçă хыççăнхи нушаллă çул.

Пурнас пулать! Çак икĕ сăмаха
Тĕпе хурса, эпир санпа утман-и,
Чире те, ултава та йăх-яха,
Малашлăха курса парăнтарман-и?

Çак кĕрешӳшĕн панă парне пек
Шăпа хăватлă юрату пиллерĕ,
Кунçул çырмин ялтравлă варрипе
Выртать асамлă асамат кĕперĕ.

Анчах паян сассу сан хăвăн мар...
Мĕн пулчĕ, тусăм?
Телефон чĕнмерĕ.

Тулта кӑна нихҫанхинчен хаяр
Ҫил татӑлса та хуҫӑлса ӳлерӗ.

«Васка, юлташӑм, ан кӗттер, васка!» —
Тем систерсе, тем пӗлнӗ евӗр, хурла́н,
Сан пек илемлӗскер те яштака
Кантӑкӑмран шаккать пӗчченҫӗ хура́н.

* * *

«Ку — Гагра. Ир каркăça карăр,
Çунса ан шăранăр тӳрех,
Хумсем вăйлансассăн кăкарăр
Кимме — тинĕс шух та хивре.

Унтан тата... лăпкăлăх, лăпкăлăх,
Пур-çукшăн ан чуклăр чуна»,—
Çапла, кукамай евĕр, кăмăллăн
Ăс панăччĕ тухтăр мана.

Анчах Гагра каçĕ пăлхавлăн
Сăрт-ту юррипе чыхăнать.
Каçар мана, тухтăр.
                    Асаплăн
Каллех ман чĕре макăрать.

Сăрт-ту юрринче — тунсăх сасă,
Çунса кĕтекенĕн сасси.
Мĕскер мана кăнтăр хавасĕ,
Мĕскер мана унăн усси!

Хумсем, çырана шăнăçмасăр,
Куçран тăварпа сапнă чух,
Тархасшăн, мана пулăшсамăр,
Ыр тухтăр,— пĕр канăçăм çук.

Хум тăвăлĕн хăйĕн сăлтавĕ,
Пĕр маншăн хăй евĕр сăлтав:

Мӗн сисрӗ-ши тинӗс? Санра вӑл
Курать-ши асап еултав?

Асап пуль. Каҫар мана, тухтӑр,
Каҫар мана, сиплӗ кӗтес.
Кавказ айӗнчен чупса тухрӗ
Ман ҫӑлӑнӑç — симӗс экспресс.

* * *

Ан пулăр çăмăлттай,
Ан ваклăр чĕрĕре.
Чун савасси нумай,
Юратасси — пĕрре.

Ан ваклăр чĕрĕре,
Чĕре пĕр кaçшăн мар,
Вăл пултăр ĕмĕрех
Сӳнсе пĕтми кăвар.

Чун савасси нумай,
Чун чĕлпĕрне ярсан,
Кунçул васканă май
Чавса инçе ялан.

Юратасси — пĕрре.
Çак авалхи тивлет
Çунат парса пире
Çӳле вĕçме чĕнет.

* * *

Ниçта пĕр хӳтлĕх тупаймасăр
Шăнса, кӳтсе çӳре-çӳре,
Çапах шанмашкăн пăрахмасăр
Сана тĕл пултăм гĕнчере.

Сана тĕл пултăм та, хĕвелĕм,
Тин сисрĕм пурнăç ăшшине,
Тин туйрăм ун пин-пин хĕлхемлĕ,
Пин-пин чĕтревлĕ вăййине.

Сапса илемлĕн те ачашшăн
Ахах-тивлет, мерчен-çеçке,
Пуш чунăма тулли тăвасшăн
Ман çул çине эс тухрăн-çке.

Çӳретĕп улăппа пĕр таннăн,
Хавхаланса, çунса, хĕрсе,
Пĕлĕт айне хĕвелĕм манăн
Кĕрсе ан кайтăрччĕ тесе.

* * *

Пĕлместĕп: пулнă-и, пулман-и
Сана чуптунă çын хальччен —
Паян эс манăн, манăн, манăн,
Паян кăна та мар-и, тен!

Кунпа хĕвел, çĕрпе çут пĕлĕт
Килĕштерсе пĕрлешнĕ пек,
Сана тĕл пулăп, теттĕм. Ĕмĕт
Ак çитрĕ пысăк çĕклемпех.

Туяттăм: пур асамлă кӳлĕ —
Пырса кĕрсессĕн ун шывне,
Е çĕклес пекчĕ илĕртӳллĕн,
Е тăвас пекчĕ хум айне.

Çав кӳлĕ пек ман юрату та.
Эп сикрĕм чăнкă çырантан.
Пĕлместĕп: путăп-и е тухăп,
Пĕлместĕп: тухăп-и е путăп,
Темле пулсан та — эпĕ сан!

* * *

Тӗл пулăп-и сана тепре?
Пӗлместӗп. Пурнăç — малалла.
Çак каçшăн та чун-чӗререн
Кунçулăма гав тумалла.

Тӗл пулăп-и сана тепре?
Пӗлместӗп. Паллă мар шăпа.
Телей пиллен кашни ире
Ят парăп эп сан ятупа.

Тӗл пулăп-и сана тепре?
Çак каç юлсассăн та хыçа,
Эс асилтерӗн ӗмӗрех
Тулли, илемлӗ пурнăçа.

*   *   *

Каллех умра, савнийӗм, çул выртать.
Каллех санпа, савнийӗм, уйрӑлатпӑр.
Çак саманта тӳсмешкӗн йывӑртан
Ӑмах чӗнмесӗр перронта тӑратпӑр.

Пӗлетӗп, тем çинчен калаçмаллах.
Пӗлетӗп, сана йывӑр, мана йывӑр.
Пӗччен — сан юлмалла, ман каймалла.
Кайран вара — хӑть йыхӑр, хӑть ан йыхӑр.

Савнийӗм! Çавракa илемлӗ çӗр.
Асат яланхилле «сыв пул» темесӗр.
Çип пек тӑсӑлакан ик çутӑ йӗр
Ав курӑнать таçта пӗрлешнӗ евӗр.

Умра, савнийӗм, вӑрӑм çул выртать.
Чӗресене хуçать тӑварлӑн тӑвӑл.
Санпа халь уйрӑлмашкӑн йывӑр та,
Тӗл пуласси кайран пулать-ши çӑмӑл?

* * *

Кĕвĕç чун?
Çапла,
Эп кĕвĕç,—
Шанса пăхрăн тэ куçран,
Упрама сана эп тивĕç
Тепĕр çын куç хывасран.

*   *   *

Ир тӑрсан та, каҫ выртсан та
Эп сана кӑна куратӑп:
Тарӑхатӑп, хӑвалатӑп,
Тархаслатӑп, йыхӑратӑп.

Ашӑтать-и, сивӗтет-и
Ашӑ кӑмӑл, сивӗ кӑмӑл,
Эп сана аса илеп те —
Пӗрре йывӑр, пӗрре ҫӑмӑл.

Тунсӑх, тунсӑх, мӗн тӑватӑн?
Ӗнтӗ ҫук ман вӑй-хӑватӑм,
Анчах эс умрах тӑратӑн,
Чунӑм, пӳлӗхҫӗм, тӑванӑм.

Кантӑкран пӑхса тӑруҫӑн,
Вӗлтӗрти черченкӗ ҫулҫӑ
Е ӳкет-и, е ӳкмест-и
Тесе пӑхрӑм. Ырчӗ куҫӑм.

Вӑл ӳкмерӗ. Вӑл чӗтрерӗ.
Кӗр сивви мӗнне пӗлмерӗ.
Тунсӑх кайрӗ ӗмӗре.
Вӗҫӗ пулӗ-ши пӗрре?

* * *

Куҫран пăхҫан, мĕн куртăн-ши, кала?
Вăтантăн та эс ҫырла пек хĕрелтĕн,
Чеченнĕн лăпчăнса, мана пĕҫертрĕн,
Ярас килмерĕ пуль инҫе ҫула.

Тапранчĕ поезд яр! ҫурса чуна.
Тапраннă поезд хыҫҫăн чупрăн, чупрăн,
Пĕлместĕп, те ҫухатрăн эс, те тупрăн,
Эс кĕтсе илнĕн туйăнтăн мана.

* * *

Сенкерлĕхрен, тĕтрелĕхрен
Çуралчĕ-и вĕр-çĕнĕ çăлтăр?
Тупмашкăн йывăр килнĕреп
Пуплетĕп: тĕлĕкре ан пултăр.

Пăхап куççулĕ тухиччен,
Куç шариччен сана пăхатăп.
Тăватăп утăм — ирĕлен,
Мана ямастăн çывăха та.

Йĕри-тавра — хĕвел ташши,
Çурхи лĕп çил юрлать таттисĕр.
...Эх, юрату — чĕре ăшши —
Эс вилĕмсĕр, вĕçĕ-хĕррисĕр.

* * *

Сыпам-и санăн илемне,
ĕçсе ярам-и?
Илем-и санăн чĕрӳне,
санпа тулам-и?
Эс юрă та, эс сăвă та,
эс çепĕç çемĕ.
Тытам-и сĕркĕч,
хĕлĕхне пĕр сĕртĕнем-и?

Ĕçсе ярсан сан илемне,
ыран мĕн ĕçĕп?
Илсессĕн санăн чĕрӳне,
пĕччен-и вĕçĕп?
Пĕр сĕртĕнсен сан хĕлĕхне,
юрру вĕçленĕ...

Эс пул çаплах.
Эс юл çаплах.
Таса. Вĕçевлĕ.

Вара пĕччеллĕхĕм те ман
санпа тăп тулĕ,
Умра выртан çул çăмăлрах,
тем анлăш пулĕ.
Кăвар çунатлă ик чĕре
çуталĕ, çунĕ,
Хĕвел тĕнчи иксĕмĕре
телей ыр сунĕ.

Эп сыпăп санăн илемне,
ĕçсе яраймăп,
Эп илĕп санăн чĕрӳне,
санпа тулаймăп.
Эп итлĕп санăн кĕввӳне,
вĕçне пĕлеймĕп,
Эп çунăп, çунăп та çавах
çунса пĕтеймĕп.

* * *

Кӑмӑл туртмасть, тархасшӑн,
ан кӳрен.
Чӗремӗмре хӗлхем те ялкӑшмарӗ.
Ан асилсем ман ҫырусем ҫинчен —
Ҫырусенчи сӑпай хӗр эсӗ мар-мӗн.

Ан ытала. Чӗре ӑшши юлман.
Ай, сивӗ. Ҫурҫӗртен салху ҫил
вӗрчӗ.
Вӗҫтерчӗ ҫулҫине кӗрхи юман,
Пӑтраннӑ пӗлӗт ӳкрӗ пӗрчӗн-пӗрчӗн.

*   *   *

Савнийӗм, ман ҫурта пырса курсан,
Ан вăрҫ мана, ҫынпа танлаштарса.
Хам пурнăҫра пухмарăм эп тупра,
Шутларăм: ман пуянлăхăм — санра.

Пуяймăп, терӗм, пусăн пуҫтарса,
Ыр курмăп, терӗм, ир тăрса ыруҫăн,
Сана курап та халӗ — чун яр-уҫă,—
Сана ҫитерейместӗп хакласа.

Эс — ман тӗнче.
Эс — пурăнăҫăм ман.
Эп ҫавăнпа
Пуянлăхшăн ҫунман.

## ТУЙ ЛАШИ

Кăрлач сивви.
Ирхи кăваклăх.
Юртать ял витĕр тур лаша.
Мĕнле асамлăхпа сăпайлăх
Кĕрсе вырнаçнăччĕ ăша!

Сасаргăк тарăннăн та шăппăн,
Сывлăш çăтса çине-çине,
Пуçларăн макăрма эс вăрттăн
Туйса хĕр çулĕ иртнине.

Пуçланчĕ юрă. Хўхĕм юрă,
Ял тăрăх юрă — ян та ян!
Систерчĕ пек:
ан кай-ха, пурăн,
Мĕн-ма васкан ачалăхран?

Систерчĕ пек:
çўре пĕр ассăр,
Юрат та шутсăр гунсăхла.
Чун туйăмне вакка ямасăр
Вĕри юратăва хакла.

Ах, юрă, юрă. Юмăç-юрă.
Ах, селĕм юрă, ан çунтар.
Ачалăх юлĕ.
Юрĕ, юрĕ,
Йăли — пиртен пуçланни мар.

Юртах, лаша, такан шаклаттăр!
Вĕçтертĕр çилĕ ши те ши.
Эс туй лаши паян — апла-тăк
Эс çĕнĕ пурăнăç лаши.

* * *

Парнеле мана, мăшăрăм, ывăл,
Ывăл амăшĕ пул часрах.
Тахçанах кĕçĕтет ман ывăç —
Сиктерес килет, ачашлас.

Парнеле ешĕл çӳçлĕ ывăл —
Юратап çуркунне сăнне.
Çуркунне пек янрав та сывă
Килтĕр ывăл хăй ĕмĕрне.

*  *  *

Сан туртăм вăйĕнчен эп тухаймастăп.
Куллен — йĕри-тавра, йĕри-тавра.
Çĕр çаврăнать, чупать, мана çаврать,
Анчах эп сан патна çывхараймастăп.

Енчен ман улшăнас пулсассăн çулăм —
Е сан çывăхнарах, е инçерех —
Туятăп: вĕçĕ пулĕччĕ пĕрех —
Эп çунса кайăттăм комета-чулăн.

Сан туртăм вăйĕнчен тухма çул çук-тăр,
Çĕрпе хĕвел хĕстерчĕç-и мана?..
Асапланни те кулăшла кăна —
Анчах умра — пĕртен-пĕр çутă çăлтăр.

Ан сӳнччĕ çеç.
Сана курса тăрсан,
Эп çаврăнма пăрахмăттăм нихçан.

* * *

Çыхăнусем кунран-кун кăткăс, кăткăс.
Ыран санпа мĕн курăпăр — ай-яй,
Пуçра сĕм вăрманти хăп-хăмăр кăткă
Йăви пек шухăш çаврăнать пĕрмай.

Сенкерччĕ çугçанталăк.
Вăргтăн-вăрттăн
Шик! шăхăрас килетчĕ, тупата!
Пинтен пĕри пулса, мана эс вăлтрăн,
Сана эп вăлтрăм. Чĕнтĕм хам пата.

Каçса кайса, пире валли юрларĕç
Пур кайăксем те пур хуткупăссем.
Сан куçунтан куççулĕсем тумларĕç —
Чÿхерĕç пирĕн телее вĕсем.

Пăхсам каллех вĕри куççулĕ витĕр,
Ху ытамна илсе, мана çунтар!
Хĕвеллĕ, янкăр пурнăçа мĕн çиттĕр,
Кăткăслатма ăна тек кирлĕ мар.

# ÇĂКĂР

ПОЭМА

«Çăкăртан асли çук».

*Ваттисен сăмахě.*

I

Ват Украина çěрěпе
Утать асаплăн, тертлěн Çеçпěл.
Вăй-хал килте лармалăх çеç те —
Утать вăл чун хавалěпе.

Мěн сывлăх? —
Халăх сыв пулсан.
Асап мěн? —
Халăх терт ан куртăр.
Тăван чěлхемěр сывă юлтăр,
Ан пěттěр халăх выçлăхран.

Лерен, мăн Атăл хěрринчен
Чуна касать пин саслă

«Çăкăр!
Туссемĕр, пулăшсамăр, çăлăр,
Туссем, хăтарăр инкекрен!»

Чуна йĕп пек тирен йыхравăн,
Ах, йӳçĕ те хаяр сасси.
Эс, Çеçпĕл, чирпеле ан авăн,
Сан тивĕçӳ халь — çăласси!

Ан тив, асапĕ те элекĕ
Йăлт килчĕç çăкăршăн анчах,—
Малтан улпучĕпе тиекĕ
Сĕнмерĕç чĕлĕ те пачах,

Кайран, тарпа юн каснă çăкăр
Хакне пĕлме вăхăт çитсен,
Чăваш телейĕ йăлтăр-йăлтăр
Хĕвел шевлиллĕн йăл илсен,

Хăравçă йĕксĕкĕн тăхланĕ
Пырса тивертнĕн çурăмран
Сана сасартăк чир тăллана.
...Йăлт килчĕ пулĕ çăкăртан.

Вуншар тулли лав хыçĕнче
Утать вилес пек чирлĕ Çеçпĕл.
Хĕвел сапан тырри çитес гĕл —
Тăван Чăваш çĕршывĕнче.

Çук, çук! Хăвна эс пĕтермен.
Чи юлашки самант вăй-халлă

Эс пăхнă вилĕм куçĕнчен.
Вара каланă:
«Эп — е халăх».

## Н

Юн каснă çăкăр, тарлă çăкăр
Шăпи çинчен шутланă чух
Нихçан та хам аттен пĕр йывăр
Асилĕвне эп манас çук.

Вăл — Волхов фрончĕн рядовойĕ,
Вăл—снайпер—фрицшăн сехремет.
Çĕре йăваннă... Чакнă вăйĕ,
Вăл сиснĕ: кун пĕтсе килет.

Лăпланнă çапăçу. Уй тăрăх
Йўç тĕтĕм шунă явăнса,
Çĕр курăннă ыгла та тăлăх —
Çĕршер çын юлнă тăкăнса.

Аттен ыратăвĕ, ылханĕ
Аша капланнă самантра
Тискер вăрă-хурах çăханăн
Пĕр çын тем хĕвĕшнĕ уйра.

Тара ўксе тăрмашнă сăвăр —
Е сутăнчăк, е дезертир:
«Вилни чĕнмест. Пухас-ха çăкăр»,—
Пĕр шухăш пулнă ун çак ир.

Тăван çĕршыв ятне ямасăр
Хăюллă çапăçнă аттен
Вилес килмен хăватсăр-халсăр.
Ун, çĕр çине йăваниччен

Пĕр тивĕç юлнă. Хăй валли
Хăварнă пульăпа вăл меллĕн
Тĕп тунă ирсĕре тирпейлĕн.
Унтан тин усăннă алли.

...Шăпа-и? Халĕ шутлăр хăвăр,
Пурнать атте. Тав кунçулне —
Вĕр-çĕнĕ кăпăшка шур çăкăр
Илем кӳрет ун сĕтелне.

Çук, шăпа мар! Юлташăм, эс пĕл,
Чуралăхпа телей çинчен
Астутарса, хăй ларнă Çеçпĕл
Аттен вĕри чун-чĕринче.

III

Çынна хăват пилленĕн ĕмĕт
Вăл килнĕ, çăкăр. Пĕрчĕрен
Пин-пин пулса, чĕр пурнăç хĕмĕ
Сапса тăмашкăн кунсерен.

Куçпа курми пĕр пĕчĕк атом
Вăйне чухлатпăр халь эпир,

Вăл, çăкăр, атомран та паттăр,
Вăл хăй — пĕртен-пĕр пăхаттир.

Апла пулсан, пĕр вĕçсĕр улăп
Çак çĕр çинче çуралмалла.
Ĕç-хĕл, телей те савăк кулă
Çак тĕнчене янратмалла.

Тăван анне пек çутçанталăк,
Телей курма чĕнсе сынна,
Уçса парать пулсассăн алăк,
Хăех вăл хуптăрччĕ ăна.

Анчах... пĕрре сиксе тухать те
Е Гитлер, е Наполеон —
Выртса юлать çап-çамрăк халлĕн
Шăп та лăп çирĕм миллион.

Эй, çăкăр! Ирĕклĕх кăварĕ!
Пĕр саншăн лăпкă мар тĕнче —
Вăйпиттĕнех ӳкет Гевара
Инçе Боливи çĕрĕнче.

Е Чилие аса илен те
Чунра — пăлхавлă тарăху.
Ытла ир пĕтрĕн эс, Альенде,
Кĕтетчĕ çăкăр халăху.

Ах, çăкăр, çăкăр! Сумлă çăкăр!
Санра эп вăрçă сăлтавне

Курасшăн марччĕ те, çĕр çăттăр
Санпа вылян мул хуçине.

Санра мĕнпур пуянлăх уншăн:
Эрехĕ, ылтăнĕ, майри...
Ытла та çак гĕнче хăрушă
Чĕнми ларсан. Туятăр-и?

Анчах та çирĕм миллион,
Анчах Альендепе Гевара,
Çунса кайса вĕри кăваррăн,
Ак,— терĕç,— пирĕн рубикон:

Кам çăкăра чура тăвасшăн,
Кам мул шутне хурать ăна,
Çав кайтăр малалла, тархасшăн,
Анчах... эпир вилсен кăна.

Куратăп, ку вăл — Çеçпĕл чунĕ
Мĕльюнсенче сиксе вĕрет.
Апла-тăк, Çĕн акан Çĕн кунĕ
Сӳнмесĕр тăрĕ ĕмĕрех!

IV

Тин пиçнĕ çăкăр — чун уççи вăл.
Ун ячĕ пиг хитре янрать.
Анчах... эрни-эрни ан çывăр,
Çулталăка ерçӳ çухат.

Чи аслă юрату арманĕ
Сан чĕрӳне пăлхатмалла.
Юлташ, çак ырлăхра манман-и
Эс çитмĕл иккĕмĕш çула?

...Яла çитес тесе васкаттăм,
Çухалчĕ савăнăçăм ман:
Хуралнă, типнĕ, куштăрканă
Хĕвел пушарĕпе вăрман.

Пĕр-ик эрне шыв-шур курмасăр
Пушхирпеле çын утнăнах
Тĕл-тĕл вуçех шăркаланмасăр
Салхуллăн усăннă пучах.

Вут чĕлхи пек — пырса ан çулăх —
Аçта ан пăх — вĕри ăрша.
Çĕр сĕткенне ĕмет çав «çулăм»,
Ĕмет непсесĕр, апăрша.

Калаçура пĕр тема — шăрăх,
Аçта-ши çумăр, иçмасса!
Ана нимпе пулăшасса
Пĕлмесĕр утрăм эп ял тăрăх.

Кайран тин куртăм. Пулчĕ кăлăх
Пăшăрханни те кулянни.
Çак нушара пулмарĕ тăлăх
Ĕçчен те харсăр ял çынни.

Хăватлă та пуян пагшалăх
Пиллерĕ хăйĕн «çумăрне»,
Парне сĕнет рабочи халăх —
Цистернăсен эшелонне.

Çĕр çывăрмасть ялти яш-кĕрĕм,
Хăй тивĕçне туять чунпа.
Çĕре сиплет вăл каçăн-ирĕн
Коммунистла хастарлăхпа.

...Кайран колхоз пуссийĕ чăшăл
Сасартăк çĕкленсе кайсан,
Кайран, йĕтем çинчи сар кăшăл
Тем анлăш выртнине курсан,

Анлангăм эп — утма тивмерĕ
Лав хыççăн Çеçпĕл пек куллен.
Чи çирĕп туслăхăн кĕперĕ
Пире хăтарчĕ инкекрен.

Анлантăм эп — çĕнтерчĕ халăх
Тăванлă-йышлă ушкăнпа,
Темле йывăрлăхран тухмалăх
Хăвачĕ пур ун çавăнпа.

Кулач тытса тулли çĕклемĕн
Хресчен тав тăвĕ ĕмĕрне
«Çĕр — халăха!» текен пĕрремĕш
Мухтавлă Ленин декретне.

V

Сĕтел ҫинче — чăлт-шурă ҫăкăр.
Ăна пĕр чĕлĕ касиччен
Хирург пек тĕплĕн алă ҫăвăр:
Чăваш йăли ку ĕмĕртен.

Турри, шуйттанĕ... Вăл йăвашшăн
Хăват шыранă хăй валли.
Анчах та Ҫăкăр! Ҫук, чăвашшăн
Никам пулман унран асли.

Киремете, аш-пăш е ҫăкăр
Пухса, ялпа пуҫҫапнă чух
Тĕпренчĕке чăваш, астăвăр,
Тăкса, персе хăварас ҫук.

Питшăллипе витсе тирпейлĕн
Чăваш упранă ҫăкăра.
Вăл пур-тăк, пулнă ун хĕвелĕ,
Вăл ҫук-тăк, ҫуннă тамăкра.

Ура ҫине тăрса хăватлăн,
Пулмарĕ халăх хĕн хурри.
Ҫав ҫăкăртан ҫĕр пин сăмах ун,
Ҫĕр пин эрешĕ те юрри.

Пĕрре ман тивĕҫĕм — шыратăп
Ҫĕр пин пĕрремĕш сăмаха.
Вăл—ман сăмах—вутра, шывра та
Мала ҫеҫ чĕнтĕр халăха.

Çав сӑмаха илтсе, хавассӑн
Шупашкарти пӗр сталевар
Рекорд тумашкӑн шут тытсассӑн,
Мана тек ним те кирлӗ мар.

Çав сӑмахпа уй-хир ӗçченӗ
Хавхаланать пулсан куллен,
Юратнӑ халӑхӑм, ӗненӗн:
Эп çӑкӑра ахаль çӗртмен.

Хӗç евӗр, çивӗч ман сӑмахӑм
Тирсен тӑшманӑн чӗрине,
Çак çӗр çинчен хӗн-хур çӑтмахӗ
Кайсассӑн хӑйӗн çӑвине;

Тӗнче тасалӑхӗ, тирпейӗ
Чуна лӑпканӑ самантрах
Ак тупӑнчӗ, туссем, вӑл, тейӗп,—
Çӗр пин пӗрремӗш çав сӑмах.

Хастаррӑн утӑп, ывӑнмасӑр,
(Юрать-и Çеçпӗлтен юлма!)
Ӗçчен калать пулсан пӑхмасӑр
Чунпа шӑратнӑ сӑввӑма!

VI

«Мир!» тенӗ пек янрать вӑл, çӑкӑр,
Тӑван Чӑвашӑн кунçулне
Аса илетӗп те, çут çӑлтӑр
Карти тухать ак куç умне.

Çăлтăрсемпе вунсакăр талăк
Калаçнă паттăр Андриян
Тăван ялне килет те, халăх
Тухать ватти-ĕттти таран.

«Мĕнле-ха сывлăху сан, кăйкăр?» —
Ыйтса пĕлмешкĕн пуçличчен
Ялйыш сĕнет тав тунăн çăкăр
Хăй ывăлне чун-чĕререн.

Вăл, космонавт, илет сăпайлăн
Хресчен пĕçернĕ çăкăра.
Вăл астивет ăна. Асамлă
Хăват çунмасть-и халь унра!

Каллех вăл космоса çĕкленĕ,
Ун йĕрĕ сӳнмĕ пĕлĕтре.
Çав çутă йĕр, туссем, ĕненĕр,
Пăхсассăн туйăнĕ пире

Ахах-мерчен пучах шевлиллĕн.
Вăл, хĕвеле савса, куллен
Шав çĕкленет, шăтса вăй илнĕ
Хăватлă Çеçпĕл Тырринчен.

## ТУПМАЛЛИ

### Çуралнă çĕр — хитре те аслă


«Туссем, ан вăрçăр...» . . . . . . . . . 3
Каçалăк вĕçлерĕ сухаçă . . . . . . . . 4
Российăпа Ленин . . . . . . . . . . 6
Ку эсĕ, ман тăван çĕршывăм . . . . . 8
Чăваш çĕршывĕ . . . . . . . . . . 11
Пылçырма . . . . . . . . . . . 13
Туслăх çинчен . . . . . . . . . . 15
Октябрь сăвви . . . . . . . . . . 17
Шурă хурăн юрри . . . . . . . . . . 19
Йĕлмелĕри уяв . . . . . . . . . . 22
«Тахçан, пĕрремĕш кун, эп çуралсан...» . . 25
Поэзи касĕ . . . . . . . . . . . 26
Вăтăр виççĕ . . . . . . . . . . . 28
Пирĕн адрес пĕрре . . . . . . . . . 30
Пурăнан, поэт! . . . . . . . . . . 32
Саласпилс . . . . . . . . . . . 35
Ула-паттăр . . . . . . . . . . . 37
Тавах, Тăвай! . . . . . . . . . . 40
Тĕнче тăтăр хитре . . . . . . . . . 42
«Мухтав сана, пĕрчĕ...» . . . . . . . 43
«Ан вăрçăр манăн ăрăва...» . . . . . . 45
Урхамахпа юланутçă . . . . . . . . . 46
Тăван ялăм . . . . . . . . . . . 50
Çул çутатса . . . . . . . . . . . 51

Умĕнхи . . . . . . . . . . 53
Ӳкерчĕк . . . . . . . . . . 54
Мунча . . . . . . . . . . 55

## Ҫынна кирлĕ юрă

«Ҫынна кирлĕ пĕлĕт...» . . . . . . . . 57
Уяв юрри . . . . . . . . . . 58
Сăпка юрри . . . . . . . . . . 60
«Тавралăх кĕрлесе вăраннă майăн...» . . 61
Ҫав ҫул . . . . . . . . . . . 62
«Эп чултăм сан кĕрекӳнте» . . . . . 63
Каятпăр! . . . . . . . . . . 64
Ҫĕнтерĕ емăт! . . . . . . . . 66
Калаҫмарăмăр сăкăр ҫинчен . . . . . 67
Мĕн пур-ши пирĕн туслăхра? . . . . 68
Хĕлпе сыв пуллашни . . . . . . 69
Тасалăх . . . . . . . . . . 71
«Иртнĕ — пĕтнĕ те...» . . . . . . . 73
Тăрнасем вĕҫсе иртрĕҫ . . . . . . 74
Кăмăл сăвви . . . . . . . . . . 76
Туслăх касĕ . . . . . . . . . . 77
«Ҫăлтăрсем пуҫланă вăйă...» . . . . . . 79
Тĕнчи ҫапла . . . . . . . . . . 80

## Эс ҫирĕм иккĕреччĕ

«Эс ҫирĕм иккĕреччĕ» . . . . . . . 81
«Эп сана манса каяс пулсан...» . . . . . 83
«Кам ку — мана йыхăрать?» . . . . . . 84

Кĕр чечĕкĕсем . . . . . . . . . 86
«Кăвак хуппи хăйех...» . . . . . . . 89
«Пурнаттăмăр. Кулаттăмăр. Юрлаттăмăр» . 90
«Чĕре хӳхлевĕ санăн сассунта...» . . . 91
«Ку — Гагра... . . . . . . . . . 93
«Ан пулăр çăмăлттай...» . . . . . . . 95
«Ниçта пĕр хӳтлĕх тупаймасăр...» . . . 96
«Пĕлместĕп: пулнă-и, пулман-и...» . . . 97
«Тĕл пулăп-и сана тепре?» . . . . . . 98
«Каллех умра, савнийĕм, çул выртать...» . 99
«Кĕвĕç чун?» . . . . . . . . . . . 100
«Ир тăрсан та, каç выртсан та...» . . . 101
«Куçран пăхсан...» . . . . . . . . 102
«Сенкерлĕхрен, тĕтрелĕхрен...» . . . . 103
«Сыпам-и санăн илемне...» . . . . . 104
«Кăмăл туртмасть...» . . . . . . . 106
«Савниçĕм, ман çурта пырса курсан...» . . 107
Туй лаши . . . . . . . . . . . 108
«Парнеле мана, машăрăм, ывăл...» . . . 110
«Сан туртăм вăйĕнчен...» . . . . . . 111
«Çыхăнусем кунран-кун кăткăс...» . . . 112

Поэма

Çăкăр . . . . . . . . . . . 113

Для старшего школьного возраста

*Порфирий Васильевич Афинасьев*

**СВЕТ ИЗНУТРИ**

Стихи и поэмы

На чувашском языке

Редактор П. Е. Димитриев
Художник Л. Я. Павлов
Художественный редактор А. А. Афиногенов
Технический редактор Н. В. Васильева
Корректор Л. Т. Захарова

Сдано в набор 08.01.80. Подписано к печати 27.05.80.
НТ 38477. Формат 60×90/32.
Бумага типографская № 1. Гарнитура школьная.
Печать высокая. Усл. печ. л. 4,0. Уч.-изд. л. 3,18.
Тираж 3000 экз. Заказ № 69.
Изд. № 85. Цена 15 коп.

Чувашское книжное издательство,
Чебоксары, пр. Ленина, 4.
Типография № 1 Государственного комитета
Чувашской АССР по делам издательств,
полиграфии и книжной торговли.
Чебоксары, Канашское шоссе, 15.

## ХИСЕПЛӖ ВУЛАКАНСЕМ!

Чӑваш кӗнеке издательстви юлашки вӑхӑтра ҫакӑн пек сӑвӑ кӗнекисем пичетлесе кӑларчӗ:

**Арсентий Андреев.** Сахалинӑм, манӑн Сахалин. Сӑвӑсем. Хакӗ 15 пус.

**Николай Теветкел.** Хӗвел вӑййи. Сонетсем. Хакӗ 20 пус.

**Сангӑр Тимбай.** Ӑнтӑлу. Сӑвӑсем. Хакӗ 15 пус.

15 пус

ЧĂВАШ КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ